**Михаил СУНТАЛ**

# ХУП ХУШШИНЧИ СĂВĂСЕМ

**ШУПАШКАР 2009**

ББК К84. 09 (Чув)6-51
УДК 8(471.344)
С 99

**Сунтал Михаил.**
Хуп хушшинчи сăвăсем.

Кĕнекери сăвăсене 20-мĕш ĕмĕр вĕçĕсенче çырнă. Унта пурнăçа ăнланас тесе тăрăшни те, çут çанталăкпа пĕр пулни те, тĕнчене юратпа тăрăшни те пур.

М. Сунтал, 2009

* * *

Пĕр хĕрхенӳсĕр, кӳренӳсĕр пурăн.
Чулпа перекене çăкăрпа пер.
Чирлесрен, вилесрен ан хăра.
Алăпа салатакан аркăпа пуçтарать, теççĕ.
Тен, телей шăла çĕмĕрсех кĕрĕ...
Пӳрни пӳрт умнех килсе тăрĕ...
Мĕн пуçтарни шывпа юхса кайсан та –
ан кулян!
Шыв типтĕр, çил тухтăр, хаяр ӳктĕр...
Усал вăл усал, ырă пурпĕрех ырă –
Вĕсене эпир шутласа кăларман!
Çавăнпа та никамран та ан хăра,
Нимĕншĕн те нихăçан та ан кулян...

* * *

Кăвак каç уçлăхри чиркӳ евĕр
Кăтартать ман тăван çĕршыва.
Пуш урам тăршшĕпе пĕрре-иккĕн
Мĕлтлетеççĕ тăрри шăтăксем...
Кам çӳрет çĕр хута çывăрмасăр,
Кам мĕлки-ха лартать çĕр çурта?
Кăвак каç пуç тăррисĕр чиркӳ пек.
Тăрринче курăнать çăлтăр çулĕ –
Çав çулпа халь каяççĕ çынсем.

* * *

Тăван каларĕ –
Ютă пулма лайăх.
Ютă каларĕ –
Машина лайăх.
Машина каларĕ –

Тутăх лайăх.

* * *

Çак пăрлă çулпа утнă чух
Санпа тĕл пулатăп пуль тенĕччĕ.
Эп майсăр пусса ӳкнĕ чух
Ярса та илетĕп пуль тенĕччĕ.
Кашни ир-ирех çак шухăшпаччĕ,
Кашни кун çав кăмăлпаччĕ...
Эс çук-и тесе пăхкалаттăм,
Чупса та тухмасть-и, шутлаттăм...
Ман сассăр йыхравăм çитинччĕ,
Çак сивĕ тĕнче хĕрхенинччĕ...
Çук, терĕç... Хĕл иртрĕ каллех.
Ĕмĕтленни те пулчĕ ахалех!
Никам та чупса тухмарĕ,
Ман кăмăла курмарĕ –
Çавăнпа та эпĕ ӳкмерĕм.

* * *

Туту хускалчĕ,
Куç ывăтрăн...
Тем калаттăн пулĕ те –
Иртсе кайрăн, калаймарăн...
Тантăшу сан енне тайăлнăччĕ.
Пĕр вĕçĕмсĕр тем калаçатчĕ.
Эсĕ вара ун пек мар –
Пĕр сăмах кăна каласшăнччĕ...
Эпĕ тарăхрăм. Хăйса çитрĕм.
Тепĕр кунне ман тута та хускалчĕ.
Тем каласшăн пултăм – калаймарăм.
Иртсе кайрăм.
Ку питĕ хăвăрт пулса иртрĕ.
Кашни кун çапла.
Пĕр-пĕрин çине пăхатпăр,

Тутасем хускалаççĕ,
Пĕр сассăр калаçаççĕ.
Мĕн ятлă эсĕ, кам?
Мĕншĕн пĕр сăмах та чĕнместĕн?
Мĕн пулчĕ?
Эпир те сăмах хушмасан мĕн пулĕ?
Эпир юратмасан кам юратĕ?
Эпĕ те иртсе кайрăм.
Мĕн тумалла, тет, халĕ?

* * *

Йывăç турачĕ çил çинче:
«Кайăк пуласчĕ, вĕçсе каясчĕ,
Хĕвел патнех çитесчĕ – çĕр ямасть»
Çил çинчи вĕçен кайăк:
«Турат çине ларса канасчĕ».

* * *

Çурма уçă алăк – кĕрессĕм килет.
Кармасăр хăварнă гардин...
Куçа илĕртет пĕр хĕр кĕлетки.
Тути те кăшт уçă – ытарайми.
Тăрать пӳлĕмре çап-çут пирĕшти...
Вăл турăш пекех – куç илми.
Çурма уçă алăк – кĕрессĕм килет...

* * *

Пулă çунатлă хĕр-кайăк
Вĕçрĕ те кайрĕ таçта.
Чылай янăрарĕ кулли.
Çапла вăл – çырма пулли!
Шыв юххи пек авăкланчĕ,
Куç кĕски пек вылянчĕ.
Эпĕ те çав юхăмра,
Эпĕ те çав кулăра,

Эпĕ те вĕçрĕм çав кайăкла...

* * *

Çĕнĕ уçлăхра Адам тата унăн юратнă арăмĕ Ева.
Акă, çутă пайăрки ӳкрĕ, пĕрремĕш сăмах янăрарĕ.
Кайăр, кам унта алăка уçса пăхать!?
Тен, вăл тахçанах тамăка янă шуйттан?
Йăлл! та йăлл! тăвать, Турă ĕçне хутшăнать.
Ева та ун патнеллех туртăнать. Ах, тур!
Хĕвел çинче хĕрнĕ тăм пек çурăлса каяттăм.
Аяк пĕрчи те каллех ыратма пуçларĕ...
Евăна хăй вырăнне кĕртрĕм те лартрăм.
Шуйттан илĕртрĕ-илĕртрĕ те тĕтре пек ирĕлчĕ ,
Тĕттĕм кĕтесе майĕпен çутă кун кĕчĕ.
Тĕнче ача сассипе вăранчĕ.
Икĕ чун ăна, ах, ачашлаççĕ,
Вăл аташса каясран хăраççĕ.
Çутă çумне çутă яраççĕ, ăшă сăмах хушаççĕ.
Ачи хăвăртрах ӳстĕр теççĕ.
Ах, Ева, ача чунне тăватпăр мар-и?
Епле вăл – пирĕн ача?
Чăваш куçлă, чăваш чунлă тăвасчĕ!
Кайăр, кам унта алăка уçса пăхать!
Паçăрхи шуйттан каллех пырса кĕрет.
Йăлл! та йăлл! тăвать, пирĕн ачана шырать.
Ах, Турă, Евăна илĕртни çитмест.
Ачана та пĕтерет!
Уçлăх тĕттĕмленет...

Унта халь пасар та ясар. Пылчăк, татах пылчăк!
Тăм ача чутах ванса каятчĕ...
Ванма памарăм, çутă çине çутă ятăм,
Пирĕн уçлăх каллех ялтăрать.
Ачи вара! Ачи!
Ачин пĕр куçне шур илнĕ.
Амăшне те палламасть, темле урăхла калаçать.
Çав тете патне каятăп, тет. Ăт, шуйттан,
Пирĕн ачана пăснă вĕт!
Евăн та тута хĕррине вăрттăн кулă тухать.
Мĕне пĕлтерет ку?

* * *

Ларатăп сĕнксе сĕтел хушшинче.
Тĕтреллĕ тĕнче – куç умĕнче.
Пăхма та – асаплă куççуль сăрхăнать,
Ларма та хăрушă – пуç çаврăнать.
Пурпĕр çыратпăр пĕр-икĕ йĕрке,
Çапла кĕрешетпĕр усал чир-чирпе.
Сăмса айĕнче те питĕ йĕпе,
Ăна типĕтетĕп сăмса тутрипе.
Ĕçне те кăштах тумалла пуль пулать,
Тумасăр тăрсан, тăшманĕ кулать.
Каю та шăтать!
Тытас та тăвас ал пынă чухне,
Эпир çĕнтеретпĕр ĕçпе çав чире!

* * *

Çулсем ман çавăнпа пуль çӳллĕ,
Кунсем те килчĕç савăк куллă.
Пăхса ларатăп – тăмана!

Мĕнле килет ку самана?
Пĕрре те савăк мар-ха маншăн.
Пĕрмай хĕнет хама манманшăн.
Вăл чышкă кăтартасшăн пуль?
Манпа та хуйхă пулчĕ пуль?..
Çапах та эпĕ шыв пек тулнă,
Çил çинчи пек тем чухлĕ хумлă
Çынран та, хамăнран та кулнă.
Аса илеп те, самана
Каллех тăрать пек чун йăтса.
Таçта утатăп çав чунпа,
Мĕнли кĕтет мана шăпа?

* * *

Ĕнер те, паян та вилес пек выртатăп.
Чĕрĕлес тесех пуль – чирлетĕп.
Ача пек хурланатăп,
Сăвăсăр, пĕлетĕп, вилетĕп.
Çанталăк та ĕнтĕ чисти урнă йытă –
Вĕрет, тулашать, алхасать...
Шăнса пăсăлать те сурăх пекех
Ӳсĕрме тытăнать,
Сăмса юхтарать...
Ăçта юратма е юрлама?
Пăхса çеç выртатăп,
Тем калаçкалатăп.
Сиввĕн сывлать çанталăк –
Гардин хăмпăланать.
Парăс тейĕн?
Эпĕ темле карап çинче, тен?
Тăвăлĕ те пур!
Ăçта, апла, каятпăр чун хурса –
Сăвă патне хыватпăр çул.

* * *

Алăк урати урлă ура ярса пуснăччĕ кăна –
Шак хытса тăтăм.
Куç умĕнчи тĕнче яр уçă. Хăрушă!
Тепĕр утăм тусанах эпĕ çутă пек
Ялтăр çиçсе илĕп те çухалăп.
Алăк урати асамлă ăслай тейĕн,
Хăйĕн витĕр ахаль кăлармасть.
Санăн сăна, чĕлхӳне, ятна улăштарать.
Килте эпĕ Мишукчĕ. Тухрăм кăна,
Айван пултăм пуль, ят улшăнчĕ.
Халĕ эпĕ Михаил. Сарри, тетчĕç.
Халĕ – Желтов. Мĕн пулчĕ-тăчĕ сăнăмпа тата?
Атте-анне те палласа илеймĕ!
Халĕ эпĕ каçăр сăмсаллă,
Сивĕ куçлă, хытă хăлхаллă...
Мĕн шуйттанĕ пулчĕ? Мĕнле алăк ку?
Ура ярса пусрăм кăна, тĕнче яр! уçăлчĕ.
Эпĕ: «Анне!», – тесе те каласа ĕлкĕреймерĕм,
Çутă пек ялтăр çиçсе илтĕм те çухалтăм.

* * *

Мĕн каласшăн пулчĕ-ши çанталăк?
Карса хучĕ темĕнле шăналăк.
Çил кустарчĕ, ӳкрĕ шурă юр.
Чĕрере ман çепĕç юрă пур.
Вăл юрра эп тахçанах кĕтсеччĕ,
Çил пекех эп тĕлĕкре вĕçсеччĕ.
Эпĕ яш ача – çӳреп пĕччен.
Ĕлĕкхи пекех ӳкет шур юр çӳлтен.

* * *

Ăçта кайсан та такăнатăн,
Хăвна валли пĕрмай тупатăн
Усал сăмах, е çамкаран
Çапса яраççĕ ăнсăртран.
Сана мĕн пуринчен нумай
Ĕç кирлĕ пулчĕ те, пĕрмай
Чупса çӳретĕн йытă пек.
Пĕрре кулса тепре йĕретĕн.
Çук, куççуле эс кăлармастăн,
Ыр кутлă та пĕрех пулмастăн.
Хӳре çӳлте пăлтăртатмасть.
Тен, çавăнпа сан кун ăнмасть?

* * *

Юрату вăл
Çуратма шухăш тытнă ача чунĕ.
Чун киличчен вăл чăн малтан кулăра
çиçсе илет.
Ăшă кăмăлра, çирĕп сăмахра палăрать.
Кайран пӳрнесем пĕр-пĕрин çумне
сĕртĕнсенех
Чун кĕме пуçлать.
Ачан халĕ туйăмĕ-сисĕмĕ пур.
Вăл куçлă, чĕлхеллĕ, чĕреллĕ...
Икĕ чунран пĕр чун пуласшăн çунать,
Икĕ ӳте пĕрлештерет.
Ӳт илет.
Чăн юрату вăл
Тин çуралнă ача чунĕ.
Чунĕ ун куллинче, ал-ура
тапкаланăвĕнче...
Вăл ашшĕ ăслă, амăш чĕриллĕ.
Чунĕ вара хăйĕн.

Çĕнĕ юрату!

* * *

Çӳлтен ман çине пĕлĕт анчĕ.
Епле вăл йĕпе, çăра...
Çуса çĕрĕпе шурă юр...
Мĕнле йăтса çӳрĕп ăна кунĕпе?
Тĕртеп майĕпен çӳлелле.
Çăлтăр вăл çӳлте!
Чупрăм та чупрăм çав шухăшпа,
Вĕртĕм те вĕртĕм вĕри сывлăшпа.
Пĕлĕтĕм вĕçрĕ те кайрĕ.

* * *

Хулара пурăнма хăратăп.
Унта темле хаос куратăп.
Унталла-кунталла çапăнса çӳрекен,
Пĕр сывлăх сунмасăр санран иртекен
Çын пек курăнсан та – кăткă.
Чултан хваттерсем пуль хăтлă
Пур теççĕ унта шыв, çутă, газ,
Шывпа чӳхенмелĕх тем пысăкăш таз...
Тата çитереççĕ, тет, тутлă.
Пĕрех курăнаççĕ ютă!
Хули те, пăхма вăл, шыçă.
Пухать кашни кун хырçă.
Çĕр пичĕ çинчи кĕсен.
Пит лайăх пулĕ, пĕтсен!
Хула вăл хăрушă хутлăх,
Тĕнче те çăтмалăх путлăх.
Мĕн чухлĕ чăваш çухалчĕ унта,
Мĕн чухлĕ усал пăсмарĕ юна?
Унта пурăнать аçтаха.
Тухсамччĕ унпа çапăçма!

* * *

Тăпра ăшĕнчен тапаланса тухрĕ те
Хĕвел патнелле туртăнчĕ.
«Атте!», – терĕ-ши?
Турат ячĕ.
Тантăшĕсемпе пĕрле ваййа тухас терĕ.
Амăшĕ ямарĕ.
Вара вăл хăй йыхăрма пуçларĕ.
Чечеке ларчĕ.
Тавралăх тĕрлĕ тĕспе тĕрĕленчĕ.
Тĕрлĕ шăна-ӳпре, хуртсем вĕçкелерĕç.
Ларсан-ларсан чечек хăйне йывăр туйса илчĕ.
Вăл вăрра ларчĕ.
Тинех çитрĕ унăн ĕмĕчĕ.
Хĕвел патнелле тепре туртăнчĕ,
Вăррине вĕçтерчĕ.
Вăрри: «Анне!», – терĕ те çĕре ӳкрĕ.
Амăшĕ: «Ай, Тур, ыраттарчĕ пуль?», – терĕ те
Хăй ытамне илчĕ.
Тăпра ăшĕнче выртрĕ-выртрĕ те
Каллех тапаланма тытăнчĕ.
Хĕвел патнеллех туртăнчĕ.
«Атте!», – терĕ-ши?

* * *

Хĕвел те суккăр куçлă.
Урамра чупакан ачине хыпашлать.
«Амăшĕ, тыт-ха, тыт», теет.
Çĕр-амăшĕ хускалмасть те.
Хăй ĕçĕпе аппаланать.
Ашшĕн кăмăлне тивĕçтерме вăхăт çук ун.

Тен, хĕрхенет те пуль ачисене.
Ачи вара тăвăллă çил кăларать.
Амăшĕн юр виттине сирсе пăрахать.
«Аннӳн кăкăрне шăнтатăн вĕт.
Витĕн-ха, витĕн! Акă сана ăшă тутăр»,
Текелет пек ашшĕ. Тӳперен юр пăрахса
парать.
Амăшĕ, ачи ура пуснăçемĕн, ура
тяппинчен
Тапа-тапа ярать.
«Аçу патне кай!», – теет.

* * *

Тăман тухнă... Чун
Ахаль мар пуль хухнă?
Тăман тухнă...
Тăмана та ухлатса илнĕ,
Кăсăя та шăнса вилнĕ.
Тăман ахаль мар пуль тухнă?
Çул хĕрринчи çурта та хĕвсе кайнă.
Аран-аран тухрăм.
Алăк ухлатса хупăнчĕ.
Çил шăхăрса вĕрчĕ.
Тен, мĕскĕнсен юрри вăл?
Куççулĕ çĕре кĕрпекленсе ӳкрĕ.
Эпĕ те пуçа пĕкрĕм.

* * *

«Тăхра», ят патăм çакă тапхăра.
Вăл пĕлтерет мĕнле япалана?
Туртса кĕрсе каять хăш чух сив авăра.
Çыртма май çук пулсан та чавсана
Пĕрех ăна шыран çак тапхăрта.
Ăçтан кĕрсе-тухма пулать-ши шăтăк?

Çула тухма çитет вĕт вăхăт.
Ăçта мĕнле-ха, шухăшлан, ларан...
Е, калăпăр, эс ĕç тума пуçлан.
Пĕрремĕш утăмне хăвах тăван.
Вара халь темшĕн чăхăмлан....
Пăрахрĕç юратма сана паян!
Çак тапхăра «тăхра» теетĕп эп.
Кăштах асаплансан пулать пит шеп.

* * *

Паян хĕл вĕçĕн пĕрремĕш тĕлĕнтермĕшĕ.
Сив тӳпере хĕп-хĕрлĕ кăлтăрмач куртăм.
Вăл кăвак инçетрен кусса тухрĕ,
Мана хăвалама пуçларĕ.
Эпĕ ун çине савăнса пăхса пытăм.
Вăл та пĕр сассăр кулса кусрĕ.
Иртен-çӳрен ăна асăрхамарĕ те!
Кашни хăй нушипе, шухăшĕпе...
Шуса ӳкес мар, теççĕ пуль, пуçĕсене
пĕкнĕ.
Хĕвел çине çаврăнса та пăхмаççĕ.
Çынсем! Паян пуçласа хĕвел тухрĕ.
Пуçăрсене çĕклесе пăхăр-ха!
Вăл сирĕн пит çăмартисенчен те хĕрлĕ.
Çĕр çинче халь темле хăтлă-хăтлă...
Ура шуса ӳкесрен тек хăрамастăн.
Хĕвел çинчен куçа тек илместĕн.
Унран лайăххи тек пĕлместĕн.
Çуртсене те паян хĕрлĕ тĕс çапнă.
Шурă юр тата кăвакарнă...
Çине кайăк пĕр йĕр хăварнă.
Çавна курма пуль хĕвел таврăннă.

* * *

Хӗл тӑршшӗпех сивӗ тӑчӗ.
Тӑманлӑ та пулчӗ, юр та тӑкрӗ...
Эпӗ пӗр пӗчӗк старик.
Курӑнатӑп пулӗ питӗ пӗчик?
Хирӗҫ пулакан-мӗн ҫул памаҫҫӗ,
Пӑрӑнма ӗлкӗреймесен, тӗксе хӑвараҫҫӗ...
Ҫул тӑршшипех ҫӳлӗ хӳмеччӗ,
Тепӗр енче мӗнне пӗлменччӗ.
Ҫӳлтен янӑ темиҫе хутлӑ пралук.
Уншӑн тӑккаланӑ пулӗ темӗн чухлӗ
налук?
Мӗн пуррипе-ҫуккине питӗ курас
килетчӗ,
Анчах пӑхса илмелӗх пӗвӗм ҫитместчӗ.
Ҫавӑн пекех, ним пӗлмесӗрех вилеттӗм...
Хӗл хӗрхенчӗ-и, ҫӗрӗпе силлерӗ
Ҫӗр ҫине тачка шурӑ мамӑк.
Шутларӑм, ку, чӑн тамӑк.
Ҫук, иккен. Ку ҫивитти
Мӗн пурине пытарчӗ,
Мӗн ҫуккине кӑтартрӗ...
Эпӗ халь чике тӑршшӗ мар!
Тем пысӑкӑш кӗрт тӑрӑх хӑваратӑп йӗр.
Пулчӗ кӗрт хӳме ҫӳллӗш, пулчӗ пӗлӗт
таран.
Эпӗ утса пыратӑп аран-аран.
Хӳме леш енне пӑхатӑп та тӗлӗнетӗп.
Йӗплӗ пралук леш енче пушӑ картиш.
Мӗн тума тӑршшӗпех карнӑ пралук?
Тепӗр енче вӗт нимӗн те ҫук!

* * *

Пӑнт-пӑнт-пӑнт! тумла.
Тин-тин-тин! кайӑк.
Ҫӗн сасӑллӑ халӗ хула,

Калăн, тем тĕрлĕ палăк.
Кама вăратать шăнкăрч?
Хула халь ларать шăпăрт.
Халь пĕчĕкки те аслă,
Çурхи хускану хаваслă.
Тин-тин! тенĕ чух, тен,
Телей йăтăнать çӳлтен?
Пăнт-пăнт! ирĕлет шăн.
Ас ту, карланкна ан шăнт!

* * *

Телей çуначĕ пулчĕ пулĕ?
Чун варкăш çил туять.
Атте пахчийĕн панулмийĕ
Çĕре пăт-пат! тăвать.

Ĕмĕрлĕхе пуль вăл – ачалăх?
Иртсен те асăмрах юлать.
Чи тутлине чун ас тумалăх
Татах çыртса пăхать.

* * *

Каçарсам, аякра та пулсан,
Сасă пулчĕ таçтан.
Хĕлĕпех хуçаланчĕ тăман...
Шурă кăчкă паян.
Асăрхарăм аран.
Хуралса хытса ларнă хуппи –
Çав тĕлте пулчĕ пуль çул юппи!
Аса илтĕм сана, чун уççи.
Эпĕ хам та халь вут пуççи!
Кăмрăкланнă тĕлте шур папка.
Хупăланнă тĕлте симĕс тĕс.
Каçарсам, аякра та пулсан,
Хĕлĕпех куç курман...

Эп сана уяман.
Асăрхарăм аран.

* * *

Утрăм та утрăм утма çулпала,
Çăтрăм та çăтрăм çурхи сывлăша.
Шыв пек капланнă çурхи шухăша
Çил вĕçтерет каçхи уçлăха.

Хурăн пуç тайрĕ пӳрт умĕнче.
Кĕтĕм те ӳкрĕм урам ытамне.
Инçет çиçсе илчĕ çул вĕçĕнче.
Пĕлеттĕм-ха эпĕ телейĕм тĕлне!

Çап-çутă пĕр çăлтăр тĕнче варринче.
Тем пек йыхăрсан та ямасть яхăнне.
Çĕр тĕрлĕ пĕр шухăш тытап каçсенче.
Пĕлеттĕм-ха эпĕ телейĕм тĕлне!

Тулли шурă уйăх шăвать тӳпере.
Çурхи уçă сывлăш лăпкать чĕрене.
Пыл хурчĕ пит тутлăн сăхать чечеке.
Пĕлеттĕм-ха эпĕ телейĕм тĕлне!

* * *

Сан чуну çын умĕнче
Пӳрне вĕçĕ çӳллĕш пулĕ?
Кăмăлу хăпса та тухрĕ.
Тин çеç тытнă пĕр тĕнче
Тухса ӳкрĕ пулĕ те
Аллăмра тем пушă юлчĕ.
Çунса тухрĕ пулмалла
Чĕрери чăн япала?

* * *

Чӳречерен пӑхса ларма питӗ кӑмӑллӑ.
«Вӗҫертес марччӗ-ха!», – тетӗн.
Иртен-ҫӳренре пур темӗнле вӑрттӑнлӑх.
Кашни курӑнать кӗтретӗн.
Акӑ, пӗри вӗттӗн-вӗттӗн чупса кайрӗ.
Аллинче тулли сетка.
Хыҫалтан ӑна, паллӑ, тем хӑваларӗ.
Килте ун, тен, пӗр купа ача?
Йывӑҫ вулли сулланать каллӗ-маллӗ.
Апла, урамра паян ҫиллӗ...
Акӑ, килет тепӗри утса питӗ канлӗн.
Ҫуркунне пулать-и вара сивӗ?
Ҫуркунне ҫӳҫӗ хальлӗхе шурӑ.
Часах витӗ йӗтен тӗсӗ...
Акӑ каллех такамсем чупрӗҫ.
Вӗсем хыҫӑн куҫӑм вӗҫрӗ.
«Тӗнчерен юлас мар-ха», – терӗм.

* * *

Кӗрлет сассу ман хӑлхара ӑш хумлӑн-
хумлӑн,
Чӗре каллех тапать хуллен, чӗр юнлӑн,
Чӗтрет чӗлхе, сас тытӑнать кӑштах,
Тӗк ларнӑ вӑхӑтрах сиксе тӑрап вӑштах.
Хӗл тӑршшӗпех ман юрламанччӗ
шӑпчӑк.
Ҫур ӗмӗр эп шыранӑччӗ... Ҫак шӑплӑх
Пӗлмен ҫапла ванма пултарасса,
Ман чӗрене ҫак сас шӑрпӑкласса...

* * *

Мӗн чухлӗ хӗрарӑм, хӗрарӑм...
Пӑхса сан ҫине хушӑран
Улпут пекех ирӗклӗ лартӑм.

Эп шăпăл та шăпăл калаçрăм
Пĕр питĕ япшар майрапа.
Куçпа вара вăрттăн сăнарăм
Пĕр сассăр ларан шăпама...
Шăпа ман пуçне çĕклемерĕ,
Пăхмарĕ пĕрре те çиçсе.
Эп лартăм шаркку пек пиçсе.
Пĕр вĕçĕмсĕр эпĕ шавларăм,
Сана ăнланмарăм пачах.
Анчах та сана эп манмарăм,
Татах тĕл пулма та хавас.
Шăпа пек эп вăрттăн эрлентĕм,
Пĕччен пултăм пулĕ турпас?
Чунпа пурпĕрех вĕрентĕм
Сан пек кăларма сассăр сас.

* * *

Шăнса вилетпĕр пуль, ача?
Çӳл ту çинчи çил ачисем пек
Чупса çӳретпĕр урамра.
Чупса çӳретпĕр те, мĕн çиттĕр?
Кӳтсе çитсессĕн сивĕ алă
Сивĕ тута çине ӳксен,
Тĕнче тăрать каллех асамлă.
Сивви те ăшăтать иккен!

* * *

Эсĕ манран тем ыйтрăн.
Тин-тин! текелет кăсăя.
Хăлхам пулчĕ пулĕ хытă,
Кайрĕ сăмах сая.
Сана ăнланма пĕлмерĕм.
Ши! шăхăрать çил.
Сассу пĕтĕмпех пĕтмерĕ –
Вилсен те татах эсĕ кил!

* * *

Атăл кайман-ха, кăвакарнă кăна.
Çил çамки çинчи пĕр чиркӳ
Хула çийĕн çапать чан-чан-чан!
Хыт çапсан та çырма хушшинчи
Чăвашра илтĕнет майĕпен.
Кĕл тума тăрса тухнă çынсем
Сăхсăхса пуç таяççĕ хуллен.
Илтĕнет тахçан хывнă пĕр юрă –
Тăнлама та чуна пулчĕ юрăх.
Ун пекки эп илтменччĕ урăх.
Атăл шывĕ юхать лăпланса,
Вăл пăр айĕн тапать хумханса,
Тан каяс пек тăрать тупата –
Чан пекех пăлхатать ман чуна.
Турă пек-и тăкасшăн юна.
Атăл тăрăх каять кăвак пăр,
Хулана хускатаь мăнă хор.
Пуç таятпăр çап-çут уçлăха.
Шухăш кĕчĕ пулас хăмăша?

* * *

Чăн çуркунне нихçан та чăлтăр-р! мар.
Вăл сăрхăнать тумлам пек. Чалт! ӳкет
Тулса çитсессĕн таса мар çĕре.
Чĕр йĕр юлать вара çĕр питĕнче.
Çанталăк та ку чух хĕрхӳ пекрех.
Ир-ирпелех хатĕрленет юхма.
Çĕр каç шăнса çитмен çĕрте
Кăнтăрлапа пуçлать тумла.
Тулма пуçлать вара ман тăнлаври
тымар.
Пир çапнă пек татах тапать чĕре.
Туятăп эп хама ун пек чухне сывмар.

Мĕн-ма ку çуркунне хĕр мар?

* * *

Тулта шурă юр – сив хĕлĕн шур тумĕ.
Стена çумĕнчех юр пĕрчийĕн пĕр хумĕ.
Пăхать кантăкран юр çине хĕрлĕ роза.
Калăн, хĕлпе хĕрлĕ роза пĕр ăслă.

Эп те пулатăп вĕсемшĕн юлташ.
Эп те юр йатăп, йывăç тавраш!
Шурă та хĕрлĕ тĕспе киленеп, –
Хам эпĕ симĕс пулма килĕшеп!

Тăтăм та тăтăм хĕл умĕнче.
Питĕ те çăмăл çеçке çумĕнче.
Паçăр кăна хама эп вăрçаттăм...
Халĕ вара çĕнĕрен-ши çуралтăм?

* * *

Юр таса мар та, пăхма та унта...
Утма та хăратăп çул тăрăх.
Юр шывĕ пурах пулĕ çав ман юнра
Пите çил касать. Мана вара шăрăх.
Çурт тăррисем те, авă, тарланă.
Кĕрте çисе ячĕ ăш çил.
Пĕр авăк кăна хĕлшĕн хурлантăм.
Çур кунĕ килсемччĕ, кил!

* * *

Сар вĕрене хĕлĕпех вăрăллă ларчĕ.
Хĕл кунĕ хăйне пĕр пасар.
Юр çийĕпе вăрă сарчĕ,
Çил те çӳретчĕ пит ясар.

Çур кунĕ те килчĕ пит хăвăрт
Выртрĕ хура çĕр тавра.
Çил ачисем пулчĕç кăшт шăпăрт.
Пуçларĕç унтан çавăрма...

Эпĕ те кĕтĕм çав çаврана.
Пĕр вăррине çыртса пăхрăм.
Йӳçĕ-пылак çак пурнăçа
Сар вĕрене пек çыртăм.

* * *

Çуркунне тесе калаймăн,
Хулана та халь паллаймăн.
Кунĕпе сив çумăр çурĕ,
Çурхи çил усал пек урчĕ.

Каçпала шăнтса пăрахрĕ,
Хĕл Мучи килсе хăратрĕ.
Тӳпере çиçет пин çăлтăр.
Çăлтăрсем, тен, шăннă çумăр?

* * *

Самана пире кăтартрĕ шар.
Миçе çул çунать пушар?
Ак, чăваш та кăтартать типшар.
Мĕн тума хушать тата тăшман?

Халь ăçта-ши Турă панă пурнăç?
Ишĕлсе выртать ман шурă çуртăм.
Питĕ лайăх-ши вара çав тӳснĕ пусмăр?
Хăтăлас тесех пуль çиллĕм урчĕ?

Ак, ӳкейрĕ аллăмри çурта.
Сӳнтерет такам чунри çутта.
Çывăхри тăваншăн эпĕ ют.

Пултăр пирĕн пĕр пуçпа пĕр кут!

* * *

Пĕчĕкскер, курпунскер,
Хӳтлĕх шыраса пуль?
Çĕтĕксер, ватăскер,
Турă çумĕнче пуль?
Чиркĕвне хăпартнă
Çӳлĕ ту çине.
Çулĕ питĕ картлă –
Çăмăл мар çитме.
Аллине вăл тăснă –
Çăкăр çук çиме?
Пулчĕ ку пит кăсăк,
Пыма çук çумне!
Шăнса кӳтнĕ ӳчĕ
Çил çамки çинче.
Кăмăлне вăл кӳчĕ
Турă умĕнче.
Эп те чăтаймарăм,
Пуçăма кăшт тайрăм.
Пулчĕ мана лайăх,
Эп те ватă пултăм.

* * *

Хуçрĕç те ватрĕç ăна, куратăп.
Хĕвел пек хĕрлĕ хăва мар вăл халь.
Çул хĕрринчи шăртне тăратнă
Чĕрĕп пек. Пĕр папкара юлнă хĕвел
Пĕр пытанмасăр пăхать...
Сарă сăмси кăшт пăрланнă...
Хуçчĕр те ватчĕр, тет. Мана пурпĕрех.
Шип! шиплетет чăх чĕппи пек папки.
Хуçнă пĕрне ларт турăш умне.
«Чăн чĕрĕлнĕ!» тейĕр вăрттăн.

Пĕтнĕ пĕри вăранать тур ачи пек.
Тин çеç шиплетнĕ пĕр сас халĕ – кĕлĕ.
Хăва хуçнă алă хучĕ хĕрес.
Çынни пуç çапать çĕре çити.
Хăва çинче халĕ хĕвел çивитти.
Хуçчĕр те ватчĕр, тет, туратти.

* * *

Кăшкăрап хурахăн
Халĕ те хăрахăн.

* * *

Шур юр ӳкет, юлать ура йĕрри.
Тĕнчен те пур çав хăй юрри!
Чуна савăнтарать ача сасси.
Амăшĕсем хитре. Мĕн каласси!

Хитри, хитре те... Ах, анчах!
Хăй чĕлхипе вăл калаçмасть пачах.
Ӳкет шур юр, хуплать хура çĕре.
Тен, çут çанталăкăн çапла йĕрке?

Мĕнле чăваш, мĕнле пăхать черчен.
Анчах мĕн-ма чан caслă-ха тĕнче?
Тен, эпĕ ăнланмастăп уттине?
Çăвать шур юр, хуплать çул хыттине.

* * *

Çур килсенех ман татăлать сукмак.
Çĕркаç хĕл юсаса  парса, нихак.
Халь çул хула урамĕпе тап-такăр.
Çавра кӳлленчĕк ванчĕ чăнкăр-чанкăр!

Капла килсе тухать тесе эп

шутламанччĕ.
Шăнса кăшт кӳтнĕ кун йĕрсе те ячĕ.
Юхса тухать кун куçĕнчен куççуль.
Пăр айĕнчен мĕн вăл выртать ман çул!

Тупса эп, утнăçем, тĕрĕс сукмак.
Аташасран хăранă пуль, ухмах!
Юрать-ха каçпала шăнтса пăрахрĕ.
Вара тĕнче хăй уттипех уттарчĕ!

* * *

Çутă, тĕксĕм, шывлă, пылчăк,
Çиллĕ, юрлă, сивĕ, хылчăк,
Тĕтĕм-сĕрĕм, шавлă, çӳплĕ,
Йывăçсем те симĕс çӳçлĕ.

Тĕксĕм куçлă шурă çурт.
Кантăкран кĕресшĕн хурт.
Пӳлĕмре тăрать халь пăчă.
Вазăра шап-шурă кăчкă.

Ах, уçасчĕ кантăка.
Ах, кĕртесчĕ çав хурта.
Ахаль мар пуль вăл кĕресшĕн.
Кăчкă тутине пĕлесшĕн.

Сивĕ пĕлĕт, ăшă çил...
Халь ăçта-ши манăн кил?
Тĕтĕм-сĕрĕм, пылчăк, шыв...
Сукмакна татах эс хыв!

* * *

Çынна темĕн чул суйсан та
Тĕнче пурпĕрех пĕтмест.
Эсĕ суйсан та – çав самантра

Вăхăт суйма пĕлмест.
Эпĕ çавна ăнлантăм:
Вăхăт вăл хăй халăх пек.
Тен, ахалех хурлантăм:
Эпĕ суйма пĕлмес!

* * *

Епле çемçе çӳлти шур пĕлĕтсем.
Çĕр çумĕпех вĕçеççĕ чĕкеççем.
Епле черчен çул хĕрринчи чечек.
Ăна ватса пĕтернĕпе пĕрех.
Мĕн чул курса эп çакă тĕнчене.
Хальччен асăрхаман çак çурт тĕсне.
Темле пĕр кайăк пуç çинче тата
Хăçан вĕçсе килсе вăл ман пата?
Çынсем çапла çĕр тĕрлĕ пулнине
Кашнин майне килен чун уççине
Хĕрĕх çула çитсен те эп ăша хывман.
Хĕрсем капла нихçан хитре пулман!
Апла, тен, эпĕ халь те ватăлман?

* * *

Кам çыншăн хăйне пĕтернĕ,
Пуррине панă, çуккине çитернĕ,
Кăмăлне ташăра килтернĕ,
Вăрман хутлăхне тарса кĕнĕ,
Пурнăç хĕсĕкрен хунанă вĕтĕ,
Çук чухне çука ернĕ...
Хăйсене кăна мар, ачисене те пĕтернĕ!
«Пĕтрĕмĕр!» – тесе выртса йĕнĕ,
Е хатĕрленĕ йĕнĕр...

* * *

Пуçра пĕр ыйту та çуралмарĕ.
Апла, пурнăçăм ман пĕр майлă.

Нимле хирĕçӳ те, çитменлĕх те çук.
Пурнап юмахри пек – пыл та çу! –
Такам тахçан панă хуравлă:
«Хушмасăр ним те тума юрамасть!»
Çакă пирĕн кăмăла питĕ юравлă.
Ара, пуçра ун пек чух ыйту çуралмасть.
Паян та, акă, çитрĕм ĕçе.
Ним те кирлĕ мар пек тек...
Çӳресчĕ те кайăк пек вĕçсе –
Пире мĕн пурри те çитет.
Çавăнпа та çуната сармарăм.
Пĕр ыйту та никама та памарăм.
Эпĕ нимуй пек а-а-анрашкаларăм...
Çакă-ши пулчĕ вара ман хуравăм?

* * *

Мăн Атăл атте те – ăçта эс пулса,
Куçа курăнмасăр мĕн чухлĕ юхса?..
Шап-шурă пăр çийĕн утса тахçанах...
Мăн Атăл хуппи вăл пулса яланах!
Халь хумлă чĕрчун пек сăхать çырана,
Чуп тунă пекех илтĕнет хăлхана.
Ку ахаль мар пуль. Пур пулĕ сăлтав.
Çумрах тăракан пĕр хĕре пысăк тав.
Алли ун сив хум пек мана ачашлать.
Вăрман аякра та, пĕрех хашш! сывлать.
Пит лайăх пĕлет юррине хура шăнкăрч,
Каллех вĕренет шăхăрма пĕчĕк шăпчăк.

Каллех хум çапать. Хальхинче вĕрирех.
Тăратпăр-ха эпĕр пĕрле чиперех.
Анчах нумая тăсăлмасть вăрттăн тапхăр.
Ачаш чĕресем хăйсемех харăс тапрĕç.
Тепре чуп тăвать те сив хум çырана,
Лекетпĕр эпир те çав сивĕ таппа...

Шутланă эпир: хум, шăпчăк, вăрман...
Кун пек пысăк пăр халиччен эп курман.
Выртать çыранра ирĕли-ирĕлми,
Çынсен чĕрисем хĕл хушши пухăнни.
Халь тин çемçелет те ачашшăн йĕрет...
Эх, Атăл хуппи çак йăлтах вĕт пĕлет!

* * *

Ача вăл тараса...
Ун чĕри тап-таса.
Ачапа кăна виçетпĕр,
Пурăнма кăштах пĕлетпĕр.
Ырлăха кăна кĕтетпĕр.
Хăрах алăра кулачă.
Урара вара атă.
Çитет хăраса,
Тĕнчене юраса...
Ача пек пулар тап-таса.
Унсăрăн пĕтетпĕр,
Çуралмасăрах вилетпĕр!

* * *

Усса пултăр та сыппа кайтăр, теççĕ.
Хырăмрах çĕрсе пĕтет вара çăкăр
хăвачĕ.
Кĕтӳ пекех кĕпĕрленсе çӳрет халăхĕ –
Уйăрса панă вĕсене апат пĕр валĕм...

Чуна пăрахсан, çын пулатпăрах, теççĕ.
Çак çĕр çинче чи кирли апат, теççĕ.
Çичĕ ютран кĕмĕл-ылтăнпа килеççĕ,
Пуйнă пĕри çавăнтах, кур, вилеççĕ...

Чăваш, ăçта вара сан чун хăвачĕ?
Нивушлĕ сана та ăсран кăларчĕç?..

Çунатчĕ авалта сăвар кăвайчĕ...
Куç айĕнчен пулсан та тĕлкĕшет кăварĕ.

* * *

Вĕренепе пĕрле кашни кун ӳснĕ
пулăттăм.
Çил çинче çулçисемпе пĕрле ал çупса
кулăттăм.
Çак вĕрене пекрех çынсене курнăттăм.
Çĕр çинче пĕр хуйхăсăр пурнăттăм...

Çук çав, пӳрмен пуль вĕрене пулма.
Вĕренепе иксĕмĕр пуçлатпăр тайăлма...
Иксĕмĕр те чăх чĕппи пек тĕклентĕмĕр,
Вĕçсе каяс пекех вĕçкĕлентĕмĕр...

Çук çав, мĕн тăвас тени пулмарĕ.
Пирĕнтен, паллах, никам та кулмарĕ.
Пĕр-пĕри çине вĕренепе пăхса илтĕмĕр:
«Пурăнатпăр-ха!» – тесех вилтĕмĕр.

* * *

Тухрĕ шăтса курăк пӳрт умĕн.
Пахча çеçкере.
Пӳртĕм, санпа тĕл пулаймăп-и ӳлĕм –
Пулап çӳреврe.
Кайрĕ хӳме те ĕнтĕ, чалăшрĕ.
Тĕрексĕрлентĕм.
Пӳрт чĕречи пăхрĕ йăвашшăн –
Ванчĕ пĕри...
Çулçă ешерĕвĕ, хурт йăшăлтатăвĕ
Тек илтĕнмест.
Пулĕ-ха пирĕншĕн чун пăшăлтатăвĕ –
Пурпĕр пĕтмес!

* * *

Çӳлте шур кутсем вĕçеççĕ,
Хĕвел анасса кĕтеççĕ.
Кун кăшт ывăнса çитнĕ –
Çĕре çутăпа витнĕ.

Çав çутă пекех çунатлă
Вĕçесчĕ çĕр çийĕн ынатлă.
Çӳлте пуль унта çул аслă.
Хĕвел те пăхать хаваслă.

Хĕвел кунĕпех пăхса ларчĕ.
Пĕр чĕпĕ пусса кăларчĕ.
Çав чĕпĕ ман чун-ши пулать –
Чĕкеç çавăнпа савăнать!

Сар чĕпĕ пекех ман пуласчĕ,
Шур кут пек çӳлте явăнасчĕ.
Чĕкеç çавăнта пурăнать,
Çӳлте çутăпа çăвăнать.

* * *

Кĕсле ту çине хăпартăм.
Чăваш çĕр-шывне йăлт куртăм.
Халăх пуç тайнă – тăрать.
Пурте: «Кĕçтенттин!» – теççĕ.
«Эсĕ пур пулсан, эпир те пур».
Карталанса юрă юрлаççĕ.
Пуçа тайса сăмах калаççĕ.
Пăхса тăтăм та чăтаймарăм.
Кĕсле ту çинчен вĕçрĕм те кайрăм!
Вăйлă çил мана ярса илчĕ.
Чăвашсем мĕн кунта çатан тытаççĕ.
«Курницана çусах тăрăр,

Улма кустарма шухăш пур», – теççĕ.
Улма кустарма эпир çитрĕмĕр,
Чăваш çĕрĕ тăрăх çӳрерĕмĕр,
Сирĕн кăмăлăра килтертĕмĕр.
Пĕр тытăнать карти, пĕр саланать,
Пирĕн куçран куççӳль тăкăнать.
Курнă пĕрне ĕнтĕ çухатăпăр,
Юррăрсене епле манăпăр?..
Тепре кăна ĕнтĕ чуп тăвасчĕ,
Сăмах хушса кăмăл тăвасчĕ.
Çук çав, тĕнче улма мар.
Çĕр чăмăрне пĕрех кустартăмăр тепĕр май!

* * *

Тĕнче хăй тĕллĕнех,
Пӳрнепе те тĕкĕнмесĕрех
Епле ишĕлсе аннине
Каласа кăтартас-и сире?
Çак тĕнчене пĕтерме
Икĕ çын та çителĕклĕ.
Пĕри тепĕрне шанма пăрахсан,
Йĕрлеме, сыхлама тытăнсан,
Тĕк тăракан тĕнче
Пĕр сассăр ишĕлме тытăнать.
Тин çеç ырăччĕ, çутăччĕ, шанчăклăччĕ...
Халь тин ĕнтĕ çук.
Халĕ кĕвĕçӳллĕ, куштанлă, усаллă...
Хĕвеллĕн çунса тăракан чунсем
Халь тин тĕпсĕр хура шăтăка
Тăванлăхпа юратуна, ачисене те,
Ашшĕпе амăшне те пăрахрĕç.
Акă мĕнле вăйлă вăл –
Пĕр пĕрне шанманни!
Урасăр ура хурать, алăсăр алать...

Ёненме кăна пăрах, тĕнче тайăлать.
Иккен, эс ху мар, çул тайлăк.
Эсĕ мар, ыттисем айăплă.
Эсĕ вĕт ырă, эсĕ тĕрĕслĕхшĕн...
Ыттисем вара шуйттан пек.
Час эсĕ вĕсене тăрă шыв çине
кăларатăн.
Ух, ултавçăсем! Сире-и!
Мĕн туса хутăр ман чунпа?
Ман чун хытсах кайрĕ.
Эпĕ кулма та манса кайрăм.
Куласчĕ – тута хускалмасть,
Йĕресчĕ – куççуль тухмасть.
Калас тетĕп – сăмах тухмасть.
Эй, тĕнче, мĕн туса хутăн эсĕ манпа?
Эпĕ сана пӳрнепе те тĕкĕнмен вĕт-ха!
Ху, вĕт, ху!
«Шаннă йăвара кайăк çук!» – терĕн.
Шанчăкли те мĕн шăна кăна.
Вăл та пулин эрешмен картине лекнĕ.
Мĕнле хăтăлса тухмалла ĕнтĕ халĕ...

* * *

Эсĕ мана хăнана чĕнтĕн.
Эпĕ татса калаймарăм.
Пĕрех ку питĕ илĕртӳллĕ пулчĕ.
Пĕрре вĕриленсе, тепре сивĕнсе кайрăм.
Эсĕ куçран тинкерсе-тинкерсе пăхрăн та
Хăратăн-им, – терĕн.
Эпĕ каллех ним те калаймарăм.
Хăратăп-и эпĕ е çук, пĕлместĕп.
Анчах чун таçтах кайса кĕчĕ.
Пĕтес килмерĕ.
Хăпартланса илтĕм те
Пыратăп, терĕм.

Унтанпа нумай кун иртрĕ.
Уяв кунĕ те çывхарса çитрĕ.
Тем тумалла ĕнтĕ,
Шухăшлатăп пĕр вĕççĕр.
Каймасан кайман пек...
Каяс пуль.
Мĕн пулать те мĕн килет!

* * *

Ăçтан пырса кĕчĕ, ăçтан çĕкленет,
Çунат пек ик вĕçлĕ, чĕре пек вĕçет.
Ăна Турă çеç пуль пĕлет?
Çăвать шур тĕтре, пуç тӳпи йĕпенет,
Çул варринех шуса тухрĕ, мĕн тет?
Ăман пурăнать пек халь пит аван.
Çăра нӳрлĕ сывлăш, ку çул пуль
çăтмах?
Ăçта-ха каян, юмахри пек ухмах?
Ăçта пырса кĕтĕн, ăçта пытанан,
Сана ку çанталăк пĕрех тĕп тăвать.
Çӳçе те кăштах темĕскер вĕт калать.
Ăман пек шăвасчĕ, вĕçесчĕ çӳлте.
Тĕтре ăшĕнче çывăрасчĕ теп те...
Ухмах пуль халь эсĕ, ларасчĕ килте.
Çиесчĕ пĕр тутлă, пĕр çуллă çăмах...

* * *

Эпĕ урăх кайăк пулнине сисрĕç çав.
Ырă тăвас тесех çырса пачĕç çăхав.

Телей вăл, паллă, шăла çĕмĕрсе кĕрет.
Телей тесенех тухать те ӳкет.

Шăлсăр тăрса юлсан вара пĕлтĕм,
Мĕн хушнине çавна кăна тăвас терĕм.

Çак тĕнчене эпĕ йăлтах парăнтăм.
Юлмарĕ-ши вара манра ним те хамăрăн.

* * *

Ачам, патша пек пулма питĕ хăрушă.
Ача пек пулсан лайăхчĕ пĕр хушă.
Пĕчĕк ачан чĕри хурăн çулçи пек.
Сан чĕрене хăй сăнĕпе сиплет.
Ачам, çичĕ юта тухма çăмăл.
Каппайланас та пур кăмăл.
Çынна хур тăвиччен, луччĕ вилесчĕ,
Е ватă пекрех хăть туйса илесчĕ.
Ачам, çĕнĕ пӳрт лартма вăхăт çитрĕ.
Кивви вĕт йăлтах çĕрсе пĕтрĕ.
Аçу панисем чун патĕнчехчĕ.
Чӳречине касма мана та чĕнесчĕ!

* * *

Шăлан тĕслĕ пулас та
Çул хĕрринче шăп ларас.
Çынсен куçне курăнса та
Çын сăмсине кăтăклас.
Ачху! тетчĕр иртнĕ чухне,
Илтчĕр чĕкеç вĕçнине.
Поэт тенин чăн сăмахĕ
Тупăнать çак çул çинче.

* * *

Çĕрпе пĕлĕт тĕл пулсан çуралчĕ
Хĕвелтен те çутă çиçĕм-шар.
Ун чухне эп çамрăкрах ачаччĕ,
Чун вара тем чул курса типшар.
Çиçĕм-шар пĕр йĕрсĕр çухалмарĕ.

Вут чёртсе хăварчĕ чунсенче.
Ах, пĕлесчĕ, вăл епле çунтарчĕ
Пиçĕхсе çитмен ачасене.
Тутасем, ак, шăл уçса кăтартрĕç.
Куç шартать халь шап-шурах кăвар.
Аслатиллĕ сăмахсем çуралчĕç,
Хупăнма пĕлмест вĕри çăвар.
Çиçĕм-шар тек урăх курăнмарĕ.
Вăл кайса çухалчĕ пуль таçта.
Тĕл пулма тепре, çук, май пулмарĕ.
Çĕрпе пĕлĕт хушшинче тата.

* * *

Ёнеркаç санпа тĕл пуласран питĕ хăрарăм.
Эсĕ ку тĕнчери чи илемлĕ те чи таса хĕрарăм.
Эпĕ вара калама çук хăрушă хлын,
Урăхла каласан, арçын ĕçне туман çын.
Совеçĕ те çук мар-ха ман, чухлатăп.
Енчен те сан умна ăнсăртран сиксе тухсан,
Эсĕ куçа хупласа шари! кăшкăрса ярăн.
Çавăнпа та сан çул çине эпĕ пĕрре те тухмастăп.
Çул айккинчен кăна пăхкалатăп.
Анчах та эпĕ ахалех хăрарăм.
Эсĕ ку тĕнчери чи илемлĕ те таса хĕрарăм.
Халĕ эпĕ, тен, ытла хăрушах та мар пуль.
Тап-такăрах эп çĕрĕпе такăрлатнă çул.
Эсĕ ирпе ыттисемпе пĕрле ĕçе кайма тухрăн.
Ман çумранах иртсе кайрăн. Эпĕ пуçа

усрăм.
Эпĕ халĕ пахчари катемпи те мар вĕт-
ха.
Эпĕ каçхи хăрушă мĕлке те мар.
Мĕншĕн, кам ку, тесе çаврăнса
пăхмарăн.
Эсĕ ку тĕнчери чи илемлĕ те чи таса
хĕрарăм.

* * *

Эпĕ ăна пĕрре кăна мар курсаччĕ-ха...
Хамăр ял ачи тесех шутланăччĕ.
Ну. пулать вĕт пурнăçра çавăн пек ача!
Пĕрре курнипех йăлт кутăнланчĕ.
Тен, вăл эпĕ мĕн те пулин ыйтасран
хăрарĕ.
Ку, çапкаланчăк, шутларĕ, манăн ята
ярĕ.
Ку çынна палличчен палламанни терĕ.
Хăйĕн ятне, тен, çавăнпа çĕтерчĕ?
Çав ачапа эпĕ пĕр ялта ӳснĕччĕ,
Тĕрлĕ асап-нуша пĕрле тӳснĕччĕ...
Çак хулара вăл халĕ çичĕ юта тухрĕ.
Манăн чунăм та çавна кура хухрĕ.
Тăванăмăрсем, мĕн-ма паллами пултăмăр,
Намăс пулнăран-и пĕр-пĕринчен
култăмăр,
Хамăр сăн-сăпата йăлт улăштартăмăр.
Халĕ эпир ют çынсем, ют çынсем
пултăмăр.
Мĕнле те пулин паллă, тăванăм,
парсаччĕ,
Хăвна епле чĕнмеллине каласамччĕ.
Эпĕ те, эсĕ те, куратăп, аптранă.
Пирĕн валли пуль ку серепене карнă?

Пĕр-пĕрне кусем паллами пулччĕр тенĕ,
Çичĕ ютран киле-киле ют сăмахсем
пенĕ.
Çав сăмахсенчен пирĕн питсене çĕленĕ,
Пĕр-пĕрне кăтартмасăрах пире вĕлернĕ.

* * *

Пилеш, эп сана палларăм.
Эсĕ пилеш ачи вĕт!
Пĕлтĕр мар, виçĕмçул
Кунта сан мучи ӳсетчĕ.
Эпĕ унпа питĕ туслăччĕ!
Кашни çул вăл
Шурă-хĕрлĕ хунарсем çакса яратчĕ.
Манăн çула çутататчĕ.
Тахăшĕ кайран касса ячĕ.
Усал кăмăлне тултарчĕ.
Вăрă пулнă пулĕ вăл.
Вăрра çутă мĕн тума кирлĕ пултăр?
Тĕттĕм, тĕттĕм, татах та тĕттĕм кирлĕ.
Касасса та вăл ăна, паллă, каçхине
каснă.
Каснă та тарнă.
Пилеш вара чылайччен хăрса выртнă.
Вăл хĕвелпе çĕр ачи пулнине пĕлмен.
Халĕ вара, акă, каллех шăтса тухнă.
Эпĕ ăна тӳрех палласа та илмен.
Амăшĕ пекех симĕс çӳçлĕ,
Ашшĕ пекех пысăк ӳснĕ.
Çине шурă-хĕрлĕ хунарсем çакса янă.
Манăн çула çутатаççĕ...

* * *

Эпĕ пĕлмен те, эсĕ каçар...
Юрă тесех-çке тăнларăм.

Вăл илтĕнетчĕ таçтан аякран –
Çăмăллăн, çил пек юхатчĕ...
Эпĕ пĕлмен те, эсĕ каçар...
Пулнă мĕн вăл çын куççулĕ.
Юхнă та юхнă кĕрхи çумăр пек.
Юрă тесех йышăнса эп.
Эпĕ пĕлмен вĕт, эсĕ каçар...
Йывăç çумнех таянса эп итлерĕм.
Çумăрлă, чăн та, çанталăк тăратчĕ,
Сывлăш вĕри те çăратчĕ...
Пурпĕр сывларăм хаваслăн.
Эпĕ пĕлмен те, эсĕ каçар...
Эп тĕлĕкри пек çӳрерĕм.
Юрă янрать халĕ те!
Пĕрре çумăр майлă, тепре çил пекрех.
Эпĕ пĕлмен те, эсĕ каçар
Хăлха тăратса итлеменшĕн,
Кăмăл санпа пĕр килменшĕн.
Эпĕ пĕлмен те, эсĕ каçар..

* * *

Шыв хĕрри. Шыв хĕрри питĕ сăртлă.
Çутă ӳкнĕ çĕрте хăйăр сăрлă.
Шыв хĕрнех хунă пĕр кăвайтă
Çунат сарнă вут кайăк пекех
Ман çине мĕн ирччен пăхса ларчĕ.
Пулчĕ вăл пирĕншĕн тарçă.
Туйрăмăр айăп пĕр авăк.
Хамăр та ĕнтĕ ик явăл.
Ал-урасем хĕреслĕ,
Тĕнче темиçе кĕтеслĕ.
Тĕнче уçăлать чечек пек,
Кăвайтă çунать хĕвел пек.
Каçĕ тăрать тĕп-тĕттĕм, –
Çакна ĕнтĕ эпĕ кĕтрĕм!

Халĕ эпир те аслă.
Турă та, тет, аснă...
Пулнă хура çак хутлăх,
Халĕ çап-çутă çутлăх!
Çыранĕ те халĕ çăтмахлă,
Иккĕн ик хут ухмахлă.
Пултăмăр тăтăмăр халĕ
Иккĕн те тепĕр халăх.
Тен, çавăнпа хăрамарăмăр,
Çӳлтен те çӳле хăпартăмăр.
Ăçта халĕ çавă çутă,
Тĕнче яланхи пек ютă.
Каллех ĕнерхи пек тĕттĕм.
Пĕрех эп ăна чĕртрĕм!

* * *

Çу иртсе кайрĕ. Август çурри.
Çанталăк та халĕ анчăк çури.
Такам тытса пенĕ ăна çут кӳлле, ,
Типесшĕн пулех çăмне хыт силлет.
Тумламĕ вара таçта та ӳкет,
Чĕре çав йытта хĕрхенет.
Типтĕрчĕ вăл каç пуличчен.
Каçпа та çӳрет-ши çав йытă пĕччен?
Эп те тухатăп пĕччен çӳреве.
Эп те вара пĕчĕк йытă çури.
Мана килĕшет çапла çумăр çуни.
Çул çинче, чăн та, пур йытă йĕрри.
Çăка айĕнче пур çап-çутă çулçи...
Çу иртсе кайрĕ. Килет кĕркунне.
Ах, тĕршĕнесчĕ çак йывăç çумне!
Мĕн чухлĕ çанталăк çумăрлăрах,
Чунра çавăн чухлĕ халь çутăрах!

* * *

Хӗвел пӑхса тӑчӗ вӑрттӑн.
Алли унӑн питӗ вӑрӑм.
Юман ҫулҫине ачашларӗ...
Юман чылайччен шарламарӗ.
Юман айӗнче питӗ сулхӑн.
Туни ҫумнерех эсӗ сулӑн!
Тӑрать вӗрене питӗ тӑп,
Вӑрман калаҫать питӗ шӑп.
Нихҫан та пулман кун пек лӑпкӑ.
Усалӗ пиртен йӑлтах хӑпрӗ.
Халь ӗнтӗ эпир те вӑйлӑ,
Вӑрман пекех ырӑ сӑйлӑ.
Епле вӗрене йӑрӑс пӳллӗ,
Унпа юнашар эс те ҫӳллӗ.
Ҫук теҫҫӗ хӗвелӗн ӑс-тӑнӗ –
Епле вӑл пире пӑхса тӑчӗ!
Алли унӑн халь питӗ вӑрӑм.
Пире тытас пек хыпашларӗ.
Эпир халӗ пултӑмӑр вӑрӑ.
Вӑрман пурпӗрех шарламарӗ.
Пире хӗвелтен вӑл пытарчӗ.
Хӗвелӗ те ӗнтӗ кӑшт тарчӗ.
Эпир те иртетпӗр ҫумӗн.
Юман тӑрса юлчӗ сумлӑн.

* * *

Юлашки хут ялтӑрса илчӗ
Ҫурла уйӑхӗн кунӗ.
Ыран авӑн. Авӑн та авӑн
Е сарӑ ҫулҫӑ пек турат ҫинче ярӑн.
Ҫилпе татӑлса ӳкиччен ан парӑн!
Ҫак пурнӑҫрах мӗнле те пулин тытӑнса юл.
Кирлӗ пулсан, суй.

Ура айӗнче пул...
Суйсан та, суймасан та тăпрах пулатăн.
Тепӗр уйăхран пӗрех хуралатăн.
Паян вара çурла уйăхӗн юлашки кунӗ.
Пур-ха тымарсенче çу юнӗ.
Симӗсех ларать, акă, çамрăк çăка.
Вăл пурăнса тухман-ха ку каçалăка.
Унпа юнашар вара, хăть ӳксе çурăл,
Сарра кайнă пекех ларать шурă хурăн.
Тен, çавăнпа курăнать питӗ сăваплă?
Мӗн калăн ӗнтӗ, пурте эпир яваплă.
Малтан курăнатпăр темле хăватлă.
Кайран вара хурăн евӗр асаплăн
Çӳретпӗр çакă çӗре кӗриччен,
Çилпе татăлса ӳкиччен...
Çук-ха, ярăн та ярăн çулçă пек.
Ыран авăн.
Савăн!

* * *

Мӗн шыратпăр, мӗн тупатпăр çак кун уттинче
Çывăратпăр, канатпăр шур пӳрт хӳттинче.
Иртеççӗ кунсем, иртеççӗ каçсем... Ним те çук!
Ку хутлăхра ман валли пурнăç çук!
Ӳт кăна тăранать. Ни вилӗ, ни чӗрӗ.
Пӗринче, ас тăвап, ăна та чун кӗчӗ.
Янраса-янраса çухалать пек пӗр сас.
Çак тӗнче сассине ас тăвать-ха ман ас.
Ку пулса тахçанах. Халӗ эпӗ йăлт пӗтнӗ.
Телее эпӗ ӗнтӗ пит нумай пулӗ кӗтнӗ.
Халӗ те эп кӗтеп кашни кун çутинче.

Мĕн те пуль уçăлмасть-и тĕнче тĕпĕнче?
Çук çав, çук. Ним те çук ку тĕнче
уттинче.
Çыврăратпăр кăна шурă пӳрт хӳттинче.
Иртеççĕ кунсем, иртеççĕ каçсем... Ним те
çук!
Ман валли ку çĕрте пурнăç çук!
Ӳт кăна тăранать. Ни вилĕ, ни чĕрĕ.
Пĕринче, ас тăвап, ăна та чун кĕчĕ!

* * *

Вĕрене çӳлерен те çӳле çӳкленчĕ.
Çул тăршшĕнче çуначĕ çирĕпленчĕ.
Çӳлте унта пĕлĕтсем вăй вылятчĕç,
Вĕрене çăлтăр патнех çитме шутлатчĕ...
Аяларах пăхма та ӳркенместчĕ.
Унта татти-сыпписĕр çын çӳретчĕ...
Пуçĕсене пĕкнĕ хăйсем, аллисене уснă.
Темле хуйхă, паллă, килсе пуснă.
Унта çул çинче пĕрмаях таса марччĕ.
Çĕр çине пăхма та – темле автобаза
юнашарччĕ.
Ку вăл вĕрене вăррине кирлĕ марччĕ.
Вĕрене çу тăршшĕ питĕ çӳле çĕкленчĕ,
Çуначĕç сарăлса çитрĕç, хуппи
çирĕпленчĕ.
Симĕс çулçăсем хушшинче сарă çупкам.
Хĕвел çути ун çине пичет çапнă ятран.
Тен, çавăнпа вăл çӳле çĕкленчĕ?
Çĕкленчĕ, çĕкленчĕ те – сивĕ кĕр çитрĕ.
Вĕрене вăрри çĕре ӳкрĕ.
Татти-сыпписĕр çӳрекен çын ури айне
пулчĕ.
Вĕрене вара çавăншăн пуль – хĕпĕртерĕ,
Сап-сарă вăррисене татах та вĕçтерчĕ.

* * *

Ĕç тумалли хамăн та темĕн чухлехчĕ.
Бродский кĕнекине пăхса тухмаллаччĕ.
Çитес эрнери ĕçсене палăртмаллаччĕ.
Пьеса та выртатчĕ... тăлăххăн.
Эпĕ вара çырмаран тислĕк йăтма
кайрăм.
Çав тумалли ĕçсем пирки пăшăрхантăм.
Тислĕкĕ те ĕнтĕ, пулса çитменскер,
шăршлă.
Çӳлерех йăтса çитерме вăй кирлĕ.
Пĕрре ура шуса каять, тепре такăнатăн.
Куç хăрать те ура пурпĕрех тăвать.
Тислĕк туртса миçе хутчен тар тухрĕ-
ши?
Ĕçне вĕçне çитерме вăй пур-ши?
Акă, хĕвел пекех ывăнса çитрĕмĕр,
Вăя та, вăхăта та тислĕк йăтса
пĕтертĕмĕр.
Пьеса та выртать халь... тăлăххăн.
Бродский сăввисене те никам та
вуламасть.
Çитес эрнере тумалли ĕçсем те пирчесе
çитрĕç.
Ах, анчах, çак тислĕке те çӳле йăтмалла
вĕт!
Пĕр-иккĕ хутласанах ларса канас килет.
Ал-ура вара мĕн тумаллине хăех пĕлет.
Акă, çиччĕмĕш хут тар тухрĕ.
Тем пысăкăш купа та пĕчĕкленчĕ.
Тепре тапăнтăмăр, тепре вăй хутăмăр,
Ку купана йăтса та пĕтертĕмĕр.
Эй, халĕ хулсем ыратаççĕ.
Ах, чĕресем те савăнаççĕ.

Калаçу та сăвăланса тухать.

* * *

Урамра çумăр çăвать. Ку питĕ кăмăллă.
Вырма пырать-и, унта пирĕн ĕç çук.
Такамăн чунĕ те кĕске хăмăллă.
Пирĕн вара пыл та çу!
Радио та, акă, мăрăлтатать. Пĕççи, тейĕн.
Ĕççи çинчен пĕрре те шутламан ку темĕн.
Мĕн тума кирлĕ пултăр мана ку вырма.
Эп юрататăп пĕççе çӳле çĕклесе выртма.
Урамра вара кирек мĕн килсе тухтăр.
Эпĕ кирек хăçан та хамшăн хам тухтăр.
Юрату юррине те ним мар, акă, чаратăп.
Хамăн туййăма хама валли хăваратăп.
Урамра çумăр. Урама тухас килмест.
Унта çӳрекен çын пĕрех вилмест.
Кунтах хăйне майлă ăшă хутлăх.
Хăйне çĕнме пултарнă çыншăн çутлăх.
Çумăр айĕн çӳреме те пуль лайăх.
Паян пурте каять çумăр çипĕ майлă.
Анчах пĕрех çынна мĕн те пулин çитмест.
Çавăнпа та сăвă çырмасăр май килмест.

* * *

Хĕвел те пур, уйăх та пур.
Çак ир çинче тасалăх пур.
Кĕлĕ тăватăп: пултăрах,
Кĕрхи кун килтĕр çутăрах!
Çиçет-ха сывлăм ялтăрах!
Турри чуп тунă вырăнсем,

Шур хурӑнра палӑрнӑҫем,
Чуна татах пӑлхантараҫҫӗ,
Ӗлӗкхине ас тутараҫҫӗ...
Халь панулми те палӑрать.
Ӑна татса ҫиесчӗ те...
Хӳме пурри-ҫке кансӗрлет.
Пӗр вӑрӑ пек пуласчӗ те...
Уйӑх ҫутийӗ пӗтерет.
Хӗвел те пур. Ҫук, юрамасть.
Таса куна эп варламас.
Эп вӑрӑ мар. Ман чун кӑна
Тахҫан, тет, пулнӑ пӗр чана.
Тен, вӑл пӑсасшӑн ҫак куна?
Ҫук, юрамасть ун пек тума.
Тӑрать-ха хурӑн сап-сарах.
Ҫиҫет-ха сывлӑм ялтӑрах.
Хӗвел те пур, уйӑх та пур.
Ҫак ир ҫинче тасалӑх пур.

* * *

Чун пӗр савӑнать те хурланать.
Урамра ҫумӑр чашлаттарса ҫӑвать.
Ирпе ӑна итлеме питӗ аван.
Ӗҫе эпӗ халӗ те тухса кайман.
Ӗнер анчах ҫанталӑк тӑратчӗ уяр.
Пахчари ҫӗр улмие кӑлар та кӑлар...
Кӑларнӑҫемӗн анчах пилӗк ывӑнать,
Чӗркуҫҫи те пӗр тӗлте ыратать.
Ҫӗр улми ани вара курӑнать чылай.
Ал-урана ку, паллӑ, ывӑнтарать самай.
Кун панӑ чух ӑна пӗтеретӗп пӗрех.
Тыт хусӑкна, Мишша, ҫирӗпрех!
Ҫил вӗрнипех тайкаланап каҫ енне.
Хӗвелӗнне тытап юлашки хӗлхемне.
Манӑн ана выртать халь хуп-хура.

Эпĕ те савăнатăп ăна кура.
Паян вара çумăр каллех тăкать.
Манăн чĕре пĕр савăннă çĕртех
такăнать.
Çумăр айне юлать пуль ялти ана...
Ăна кăларса пĕтерме хатĕрле хăвна!

* * *

Паян эпĕ пĕччен, питĕ пĕччен...
Мана çавăнпа та кăшт кичем.
Çанталăк та ĕнтĕ хăй талай.

Пур пулĕ çӳлте хăйне майлă ала.
Пĕрре хĕвел, тепре çумăр кăларать.
Алаçă, паллă, сăвăрса ларать...
Эпир халĕ çанталăк тĕлĕкĕ пуль.
Ыйхи унăн тата килет пуль.
Çул хĕрринчи чечек те ун алинче,
Çул хĕрринчи вĕрене те ун ăшĕнче...
Хытхура хытсах ларнă. Ларать...
Çак тĕнчене кам уçса ярать?
Пĕрре хĕвел, тепре çумăр тăкăнать.
Çулçă çинче кăна чун ярăнать...
Çутă кăларакан ала манăн алă пуль.
Ĕнтĕ пӳрне витĕр çутă сăрхăнчĕ темĕн
чул.
Пӳрне витĕрех тумларĕ çумăр тумламĕ –
Çавăн пек вăл курăнать чун хутламĕ.

* * *

Питĕ тĕлĕнмелле вĕт-ха вăл.
Чун та, эпĕ асăрхарăм, чисти йывăç.
Йывăç пекех чечеке ларать, çулçă
сарать...
Кĕркуннепе хытсах пырать!

Ëнтĕ халĕ çуркуннене кĕтме тивет!
Кĕр хыççăн, ас ту-ха, хĕл килет.
Йывăç пекех шăнса хытатăп ĕнтĕ эпĕ
те.
Ку, чул юпа тесе, ватма та тăрĕç, тен.
Кам вилнĕ вара тесе, пырса вуласа та
пăхĕç, тен.
Эпĕ вара тӳпере Хуркайăк çулĕ çине
ӳкнĕ пек.
Ку çул тăрăх çăлтăрсем çеç куçаççĕ пек.
Хăшпĕр турат çинче чылай пухăнса
кайнă пек.
Сан пуçу çине, ас ту, халех персе
анаççĕ!
Çăлтăр çунă кунсем, ан хăра, иртеççĕ.
Юр пĕрчисем те çăлтăра аса илтереççĕ.
Акă килсе çитĕ çур кунĕ тепре.
Чашкăрса хăпарса çитĕ чун тĕпĕнчи
çĕпре.
Йывăç каллех çулçă сарасшăн хăлаçланĕ,
Хăй те Хуркайăк çулĕ пулса çунатланĕ.
Чун кĕнĕ кăна тесе калĕç вара ман
çинчен те...

* * *

Чӳрече айĕнчи роза çеçке çурма тăнă.
Çурма уçă тути, курăнать, питĕ шăннă.
Çулла пулнă пулсан çурăлатчĕ-ха ĕнтĕ.
Кĕркунне вара пысăк пулма хĕнĕ.
Кĕркунне пурте пĕтет, кĕр кунĕ пĕчĕккĕ.
Куркунне çеçке çурма ан тăрăш!
Сивĕ чухне эсĕ пул луччĕ чăрăш.
Курăнать вăл хĕлĕн-çăвĕн чечеклĕ.
Йĕппи унăн пулĕ пĕчĕккĕ...
Манăн та пуласчĕ çавăн пек пĕчĕккĕ.

Çĕр çумне чĕрĕп пек хутланса ларасчĕ.
Йĕппĕмсене çӳлелле тăратасчĕ.
Ан тивĕр мана, çывăха ан пырăр,
теесчĕ.
Йĕп пек хытса ларма ан кансĕрлĕр!
Роза та чӳрече айнех хытса ларнă.
Мĕн тума вăл, айван, çеçке сарнă?
Çеçки алран тухса тарма хатĕр кайăк
пек.
Чĕри талпăнать пуль. Вилес килмест
вĕт!
Темле тапăлтатсан та хĕвел патне
çитеймĕн.
Сивĕ çапнипе часах татăлса ӳкĕн...
Эсĕ те чечеке шелленĕшĕн ӳкĕнĕн...
Эх, пĕрех вĕт-ха роза çеçке çурма тăнă.
Хăй, курăнать, питĕ-питĕ хытă шăннă.
Кил, алла илсе ăшăтам сана, чĕппĕм.
Ай, чикет хăй. Епле вăл йĕплĕ.

* * *

Эпĕ çакна ăнланмастăп:
Кĕркунне те чечек пекех ларать.
Пĕтес умĕн мĕн-ма хитре курăнмалла
тет?
Пĕрре симĕс, тепре сарă та хĕрлĕ.
Мĕн тума ĕнтĕ эсĕ халĕ кирлĕ?
Мана та пурăнса çитрĕ.
Турат тăршшĕпех çупкам вăраллă.
Ăна ӳстерес тесе мĕн чул тăрăшнă?
Пĕлĕт çăвăпе çумăр çунă.
Кунĕ-кунĕпе хĕвел пăхнă.
Çулçă хушшипе çил те çул хывнă...
Пĕрех пĕтме вăхăт çитнĕ.
Пĕрре симĕс те хĕрлĕ, тепре сарă та

хура.
Санпа та çапла тусан мĕн пулĕ?
Эпĕ çакна ăнланмастăп.
Кĕркунне те чечек пек ларать ку йывăç.
Пĕтес умĕн мĕн-ма илемлĕ курăнмалла
тет?

* * *

Сăмах пани 21 çул çитрĕ.
Ун чухне те çапла ылтăн кĕркуннеччĕ.
Çулçă тăкăнатчĕ, хĕрлĕ чечек те пуçне
пĕкетчĕ...
Сăмах та çеçке пек пулатчĕ.
Каланă-каламан кантăк пек ванса каятчĕ.
Ăçта-ши халĕ çав сăмах ванчăкĕсем?
Пĕрисем чĕрене тĕрĕсех пырса тивнĕ.
Теприсем вара ура айне пулса пĕтнĕ.
Сассисем вара хăлхара халĕ те пур.
«Кирек мĕн килсе тухсан та пĕрех пĕрле
пул!»
Çав кĕркуннерен тăсăлать çавраçиллĕ
çул.
Унтанпа 21 çул иртрĕ.
Ун чухне те çапла ылтăн кĕркуннеччĕ.
Çулçă тăкăнатчĕ, чечек те пуçне
пĕкетчĕ...

* * *

Эсĕ çакă тĕнчене çунтарса ярасран
хăрăрăм.
Сана хирĕç вирт ятăм.
Çапăнчĕç икĕ çулăм. Çĕклентĕмĕр çӳле
ракетăн.
Çак çĕр çинче пулмарĕ пурăнса ретлĕн.
Вутлă юпа пек çакăнса тăтăмăр çĕр

çийĕн.
Унтан хăвăрттăн вĕçсе кайрăмăр
çăлтăрсем çумĕн.
Çӳлте пирĕн çине çăлтăрлă çумăр çурĕ.
Вутлă ӳт сĕтлĕ кӳлĕре чӳхенчĕ.
Çак тĕнчене килнĕ чухнехи сас кăларчĕ.
Турă та пире курса хĕрхенчĕ,
Пирĕн çине атте пек пăхса ларчĕ.
Эпĕр вара пĕр вут юпа пек çунса
тăтăмăр.
Çĕр çинчисем ку темле вĕре çĕлен пуль,
терĕç.
Çуннăçемĕн, эпир татах кăварлантăмăр.
Чăн та, каçхи тӳпере кăвар сапаланса
пĕтрĕ.
Эпир çăлтăр пулса çĕр çине ӳкрĕмĕр.
Çын çеç пулнăшăн эпир питĕ ӳкĕнтĕмĕр.
Çĕр çийĕпе таçта халĕ те чупать пĕр
çулăм.
Эпĕ ăна хирĕç вирт яма пултăм.

* * *

Кашни кун, чăн та, юлашки пек
туйăнать.
Кашни утăм кун-çул вĕçне çывхартать.
Кунĕ-кунĕпе, чарăнсассăн та, çумăр
çăвать.
Çул çинче сарă-сарă çулçă выртать.
Акă пĕри ура айнех вĕт кĕрсе каять!
Çил ăна çĕр çине çавăра-авăра çапать.
Çулçă кӳлленчĕке кĕрсе ӳкрĕ те
Шыв çийĕн карап пек ишсе каять...
Пĕтет ĕнтĕ вăл, шыв айне пулсах пĕтет!
Кашни çулçă, кашни утăм юлашки пек
туйăнать.

Ку кĕркунне ман чуна питĕ хăрататъ...
Çулçăсăр вĕрене пек пăхса тăратăп.
Йывăç та вĕт ман пекех шакла пуçлă.
Аялти турачĕсене çĕр çинех уснă.
Çĕр çумĕнче, чăн та, лăпкăрах ĕнтĕ.
Çулçă та, кур, хура çĕре ĕненчĕ.
Хĕвел çинче ĕнчĕ-ĕнчĕ те ура айнех
вĕçсе анчĕ.
Вăл никамран та, никамран та
хăрамарĕ.
Вăл çак çул çинче халĕ те вут куçлă.
Вăл пĕр кунлăха та пулин ман чуна
уçрĕ.

* * *

Хĕвел ирпе хĕрелет.
Хурăн та хăлаçланать.
Çулçи тĕл-тĕл вĕçкелет.
Çӳлте çил хуçаланать.

Çил мана та хăвалать.
Ку çулça тататăп тет.
Хĕвел тата хĕрелет.
Çил нихăçан лăпланмасть.

Эпĕ халь туратлă мар.
Чун та çулçăн татăлмасть.
Вăл халĕ хăй те тăвăл,
Ăна халĕ питĕ тăвăр!

Сивĕ тĕнче çупăрлать.
Çулçă, çулçă вĕт талать!
Хĕвел çӳлех çĕкленет.
Çил çулçăпа çеç çӳрет.

Çулçă çавна çеç кĕтрĕ,
Çил çинче çунса та пĕтрĕ.
Анчĕ вĕçсе вĕлтĕр-вĕлтĕр.
Çавнах тĕл пулса эп пĕлтĕр!

* * *

Хальхи туссене çухатрăм.
Чуна пĕтĕмпех шуйхатрăм.
Ман пур-ха çуралнă çуртăм,
Пĕтмен-ха тухатнă туртăм.

Ман пур асатте лупасайĕ.
Унта тепĕр хут çул хывăп.
Сап-сар вĕрене ăна сарнă –
Ăна та пуль пулнă йывăр!

Пĕр-ик çулçине хăварнă.
Турат витĕр çил кăларнă.
Пĕрех вăл тăрать хăватлăн,
Пĕрех ун çулçи çунатлă!

Мана та унпа питĕ хăтлă.
Маначчĕ ун пек чăтăм.
Вара, тен, эп те çунаттăм,
Çулçăн чуна хушаттăм...

Çак вĕренен те пурăнăç...
Ун çумĕпе эпĕ утрăм.
Хам çуртăма çухатрăм.
Чуна ахалех тухатрăм.

* * *

Майĕпен, питĕ майĕпен чăмăртанать чун.
Пĕрре, вăй çукран пуль, сарăхнă çулçăпа вылять.

Тепре тахçан лайăх пулнисене аса илет.
Çак çилпе те пулин çапăнса вăй илетĕп,
тет.
Темле кукăль пĕçересшĕн пек.
Эпĕ çавна унатăп пек.
Мана лайăх чуста кирлĕ.
Пĕрре çулçă çумне сĕртĕнетĕп,
Тепре хам та çулçă пекех вĕçетĕп.
Чунăма пĕр çĕре чăмăртас тетĕп.
Вăл вĕт сапаланчăк!
Ĕнер кăна, акă, вăрçса кайрăм.
Çавна пулах çулçăпа тĕл пулаймарăм.
Кăмăл кăмăскалансах çитнĕччĕ.
Тумалли ĕçсем те – виççĕччĕ.
Чуна çухата-çухата çӳрерĕм.
Халĕ ăна чăмăртиччен унатăп.
Ку чустапа, туятăп, кукăль пĕçерме
пулать!
Çулçăпа кăна мар, çилпе те çапăнатăп-
ха!
Пурăнмалăх чун, акă, чăмăртанать те...

* * *

Çĕнĕ пурнăçа эпĕ сарă хурăнран
пуçларăм.
Акă эпĕ унран хăпăнса утса кайрăм.
Хурăн пĕччен тăрса юлчĕ.
Хурăн чунлă эпĕ халĕ.
Хамăн пурнăçа эпĕ хурăнпа кăна
виçетĕп.
Хурăн пекех хĕвел çинче, çил çинче
пиçетĕп.
Йывăç пекех пысăккă пуласшăн...
Хальлĕхе унăн пĕр пĕчĕк туна кăначчĕ...
Тепĕр пĕр çĕр çултан ӳссе çитĕп те

Çĕр туратлă, пин çулçăллă пулăп...
Эпĕ йывăç, эпĕ йывăç кăна вĕт!
Унтан ытла ÿсеймĕп!
Вăхăт çитсен, акă, çулçăна та тăкăп...
Мĕнле канлĕ мана тесе хулă шăхăрăп.
Хурăн пекех хĕлле шăнса-хытса ларăп...
Пултăр, пултăр хĕл питĕ сивĕ.
Çуркуннепе вара чĕрĕлĕх килĕ.
Эпĕ каллех çĕр сĕткенне ĕмсе илĕп.
Папка хыççăн папка сарăп.
Хурăн пекех çĕр туратлă пулăп.
Пурнăçа хурăнпа виçме питĕ меллĕ.
Халĕ тин тĕнчери вырăна тупрăм.
Эпĕ хурăн пек пултăм.
Ун çумĕнчен хăпăнса кайрăм.
Хурăн пĕччен тăрса юлчĕ.
Çавă мана вăй парса тăчĕ.

* * *

Тĕнче пĕтрĕ тесе шутласа пынă чух
Хĕвел якăлт сиксе тухрĕ.
Çулçăсăр тăрса юлнă хăва тăрăх
Витĕр шăтарса пăхма тытăнчĕ...
Пĕтмен иккен, пĕтмен çак тĕнче!
Хĕвел те ирпе вылянса тухать.
Çулçă та çутă.
Чунĕ тухнă чух
Япала хăй çуталса каять пуль.
Çын та.
Пĕтрĕ тесе пынă вăхăтра хăва пек
Йăкăлт-якăлт! сиккелесе илет.
Е вăл хăй те çак çулçă пек,
Тен, çавăнпа савăнать те...
Пĕтсе-пĕтсе пынă çĕртех
Чун вăйне пухса пычĕ пуль, кулса ячĕ.

Çутă ирпе усал пулма май çук.
Çанталăк ăшах мар пулсан та таса!
Ĕнер кунĕпе çумăр çурĕ...
Çылăха çанталăк тӳсрĕ.
Чун та çуталса çитрĕ.
Халĕ çăмăлрах ĕнтĕ...
Тĕнче пĕтрĕ тесе пымастăп тек.
Пĕтмен çак тĕнче.

* * *

Ăт, кĕтсе илтĕмĕр.
Шур юрпа витĕнтĕмĕр,
Шăна пек «вилтĕмĕр».
Мĕншĕн-ха савнăç,
Мĕншĕн-ха явăнтăм
Çӳлти юр пĕрчи пек...
Чунне пăхса выртрĕ
Çĕр çинчи çулçă...
Çăтăр çеç çыртрĕ
Сив юр ман пите.
Якăлт! çеç сикрĕм,
Сикрĕм те – ӳкрĕм.
Нимĕн пулман пек
Юра кăштах тытрăм –
Епле вăл чипер.
Ӳте чĕпĕтет.
Ку вилĕм вăййи
Пире кирлĕ мар.
Çулçă вара
Юр айне юлчĕ.

* * *

Хĕл ларчĕ... Паян тата сивĕрех.
Çӳресчĕ-çке теттĕм çĕлен ăшшипех.
Сап-сарă вăрманăн хура варрипе

Хулран çавăтасчĕ пĕр сарă хĕре.

Хĕл ларчĕ, кăштах савăнатăп та пуль.
Ача чух тăваттăм пĕр-икĕ йĕр.
Аван пуль хывма çĕн юрпа çĕнĕ çул,
Çула çĕтерсе кĕрхи хура çĕр?

Хĕл ларчĕ. Мĕн тăвăн халь тин?
Пуçланчĕ хĕлле темĕнле карантин.
Хĕл урлă каçма майĕпен хатĕрлен.
Хĕлле чăн çĕлен, ху пĕлен.

* * *

Эс пăхса тăратăн,
Эс утса пыратăн...
Атăл сивĕ хумлă,
Çумăр юрпа хутăш...
Çĕр çулхи эс ватă,
Çирĕмри эс каччă
Кампа пĕрле чупнă,
Кампа пĕрле кулнă?
Миçе мăшăр çамрăк
Кунта хăйне тупнă?
Халĕ мĕн тăватăн,
Халĕ мĕн шутлатăн?
Камăн чĕри пыллă,
Кам çăварне карнă?
Усал сăмах пенĕ,
Мăшкăллас-ха тенĕ.
Пуçу тăрăх пылчăк
Вăрăм йĕр хăварнă.
Эх, йăваш чăвашăн
Уçăлмасть çăварĕ.
Куçĕ кăшт йĕрсен те
Тути кăшт кулать-çке.

Халĕ ĕнтĕ эсĕ
Ху та юн хĕреслĕ.
Халь ăçтан тупатăн
Чун ăшшин хăвачĕ
Хĕрсемпе утмалăх,
Савăнса кулмалăх.
Атăл сивĕ хумлă,
Çумăр юрпа хутăш...

* * *

Таса сывлăш кĕчĕ пуль, ача.
Турă пуррине чунпа туятăп...
Турă вăл малтан хĕрарăм пулнă.
Çак тĕнче те вăл йалтах хĕрарăм!
Çавăнпа сана эпĕ юратрăм,
Эсĕ те паян мана çуратрăн.
Сан ачу халь Çĕр çинчех пурнасшăн.
Эс ыйтсан утать çарран шыв çийĕн.
Эс кулсан хĕвел пекех çунать вăл.
Эс вăрçсан пăрлак пекех хытать...
Турă пуррине паян туятăп.
Эпĕ ун ачи пулатăп...
Кунран кун хуçаланатчĕ Эго,
Тăмран тунă çын кăначчĕ Эпĕ.
Вĕрсе кĕртрĕн ман ăша чĕр сывлăш.
Ак, çуралчĕ те тепре пĕр ывăл...
Таса сывлăш кĕчĕ пуль ăша?
Турă пуррине чунпа туятăп...

* * *

Тахçанах сиксе тухманччĕ
Сарă хĕвелпе пĕрле.
Кун пек хурăна курманччĕ –
Тăм илмен-ши, теп, çĕрле?

Тĕп-тӳрех вăл, сарă çӳçлĕ,
Ывăл çӳллĕш çеç вăл ӳснĕ.
Манăн ывăл юнашар –
Çӳçĕ унăн та сап-сар!

Сар хĕвел пуль çутă сапрĕ,
Чĕре хăвăрт-хăвăрт тапрĕ.
Хурăн пек ларать ку шкул,
Эс ăна курсассăн, кул!

Шкул кĕтсе тăратчĕ шăпăрт,
Шăплăха хускатрĕ шăпăр.
Вераппи шăлать картиш –
Ак, тăватпăр пĕр путиш!

Сарă çулçă пĕр купа.
Пит аван пырса выртма.
Сар хĕвел çӳлтен пăхать,
Ывăл мăкăльчăк хуçать.

Эпĕ те пăхса тăмарăм,
Шăпăрпа шăлма пуçларăм...
Сар хĕвел халь çĕр çинче –
Эпĕр сар хĕвел çинче!

* * *

Аякран куç хӳрипе тĕл пултăм.
Эс лараттăн пальма айĕнче.
Урамра юр йăтăнатчĕ курттăн –
Шап-шурах выртатчĕ çут тĕнче.
Çуллахи пек питĕ-питĕ шăрăх
Тăвăл умĕн тулнă шух чĕре
Кусса кайрĕ çутă залă тăрăх,
Çитеймерĕ кăштă çав çĕре.

Аякран кăшт вăрттăн пăхса выртрĕ,
Хăяймарĕ курăнма куçа.
Пурпĕрех вăл питĕ ыррăн-ыррăн
Тупрĕ вăй хăйпе çеç пурăнма.

* * *

Эс çуралнă вырăнта çӳрерĕм.
Мĕн куç курнă – чĕрере ӳкертĕм.
Икĕ чӳречеллĕ çурт курнать кĕтретĕн.
Эс унта мана хăçан чĕнсе кĕртетĕн.
Чун ăшшиччĕ аçупа аннӳ,
Аякрах та марччĕ – хреснаннӳ.
Ах, епле чикет вăл пурăнăç йĕппи,
Эсĕ ху та пултăн тăр-тăри чĕппи...
Эп санпа çав урампа кăшт утрăм.
Пĕр тĕлте хам телее йăлт тупрăм...
Юр çине ӳкетчĕ питĕ пĕчĕк йĕр.
Час ăна шăлса каять те юр...
Санăн уттуна вара текех кураймăп,
Хам та шурă юр пулса выртса
юлайăп...

* * *

Калать мандолина. Калавçă
Хăрах урине тăсса ларнă.
Хăй йăлт шурăмпуç шутлавлă –
Тĕнче пĕтĕмпех шăпланнă.

Кĕвви тĕнче витĕр çӳрерĕ.
Пире те çӳле йăлт çӳклерĕ.
Çук халь тĕнчере пурнăç терчĕ –
Телей патне кĕвĕ çитерчĕ!

Акă, таса пӳлĕм урлă
Сап-сар панулми кăлтăрр! кусрĕ.

Калавçă пуçне питĕ уснă –
Çавнă эпĕ çеç куртăм!

Калать мандолина. Ас илнĕ
Таçти туйăмсем вĕçсе килчĕç.
Эпĕр шутланă: тен, вилнĕ –
Акă, вĕсен чăн килĕ!

Ак, панулмин чăн шăршийĕ
Таçта кустарса та кайрĕ.
Кĕлт вылянять куç харшийĕ...
Ман чун панулми шăршиллĕ.

* * *

Монна Нина, монна Нина, монна
Нина...
Тухать те ӳкет куç умне пĕр картина.
Джоконда пек вăрттăн пăхать кантăкран.
Чупать те тухать урама алăкран.

Анчах урамра пуш-пушах, пуш пушах...
Таçта-ха çӳрет сан чунри падишах.
Эс ху та тăратăн чăн-чăн чăваш хĕрĕ,
Эс ху та тĕнче тĕрĕленĕ çут тĕрĕ.

Нумай-и тăрса эс пĕччен çакăнта.
Пĕрех кĕтсе илтĕн. Халь ку яхăнта
Таçта аякра ярăнмастăп вĕт-ха!
Халь тин эсĕ пăхан. Эп кĕреп алăкран!

* * *

Пĕлĕтлет ĕнертен...
Тунсăхлатăп, пĕтетĕп...
Çавăнпа пĕлĕтлерĕ – пĕлетĕп.

Юр çăвать.
Юр чуна çутатать.
Юр пĕрчи те хушасшăн çунат.
Пĕтĕмпех ман чунпа çыхăнать.
Эпĕ çакă тĕнче.
Çак тĕнче те манра...
Юр çăвать, ман чуна çутатать.
Эсĕ пĕлĕт, апла. Çавăнпа пĕлĕтлет.
Эсĕ юр. Кăшт пулсан та мана
çутататăн.

* * *

Телейрен пĕр ванчăк юлчĕ.
Ванчăкне эп ятăм, ятăм юмăç.
Пăхрăм-пăхрăм – шывĕ юнлă!
Халь кĕтет пек пысăк хурлăх.
Каçаймарăм хамăн телей урлă!
Эп сывлатăп кунĕпе халь ассăн-ассăн.
Ним пулман пекех манпа калаçрăн!
Аякран янрарăн илтмĕш ача саслăн.
Ĕнтĕ эп те чĕлĕ. Ăна çĕçĕ каснă.
Ыраттарчĕ, ман чуна тем ыраттарчĕ...
Ман чуна такам чĕвен тăратрĕ.

* * *

Эсĕ мана пĕринче пĕр панулми панăччĕ.
Манăн ăна тутанса пăхмаллаччĕ...
Эпĕ вара ăна пуçтарса хутăм.
Тутанса пăхма тăхтарăм.
Иртрĕ вăхăт чылай.
Ман панулми çемçелчĕ,
Пичĕ пĕркеленчĕ.
Шăршийĕ вара вăйланчĕ.
Кашни кун эпĕ ăна шăршласа пăхаттăм.
Ӳсĕртсех яратчĕ...

Эпĕ ăна пĕрех çиес темен!
Вăхăчĕ вара хăй ĕçне турĕ турех.
Панулми çĕрчĕ.
Питĕ тутлăн, питĕ шăршăлă çĕрчĕ.
Питĕ çиес килсен те, –
Çĕрĕкĕн хăйĕн тути, –
Эпĕ ăна çимерĕм.
Вырттăр терĕм мĕн типиччен.
Типсе çитсен унта куç курĕ.
Тен, эпĕ ăна тăпра пуличченех тытăп.
Тăпра пулса çитсен чĕре çумĕнче тытса çӳрĕп.
Вăхăт-вăхăтран шăршласа пăхăп.
Панулми шăршине аса илĕп.
Вара каллех пĕрле пулас килĕ.
Панулмие çыртса пăхас кăмăл çуралĕ.
Ах, епле тутлăччĕ вăл!
Питне ачашласа пăхăттăм...
Мĕн тăвас халь ман?
Хамăн та тăпра пулас!

* * *

Пиншер çулсем урлă,
Вуншар вилĕм витĕр
Ман чун вĕçсе анĕ çак çул хĕррине.
Хула пăхса выртĕ,
Чĕре мана илтĕ, –
Эп хам та пĕлмен чун çапла чĕррине!
Ура айĕнчи шурă юр чĕриклетрĕ.
Ман йĕр çине пусрĕ пĕр шеп хĕр пĕрчи.
Хĕл евĕр темскер, темĕскер чĕвĕлтетрĕ,
Чуна çуса тăчĕ шур юрăн çути.
Сап-сарă хĕвел хăй ачишĕн сывларĕ,
Чуна шăтса тухрĕ сарă чечек.

Çаплах-ши вара çуркунне пуçланать-и,
Çаплах хĕл варри çуратать кĕл чечек?
Вĕçеççĕ, вĕçеççĕ тавран икĕ лĕпĕш.
Чĕвĕл те чĕвĕл темле кайăксем.
Чечек çил çинче кăштах-и хускалчĕ,
Пĕлмерĕ-ха вăл хăй часах пĕтессе...
Çапах çĕтсе пĕтмĕ чĕв-чĕвĕл сассийĕ,
Чечек пулса юлĕ çак çул хĕрринче.
Ман чун та вĕçтерĕ темле юр
кассиллĕн,
Тепре çунса ӳкĕп пĕр хĕр тĕлĕнче!

* * *

Вĕри сывлăша çăвара уçса кăларса ятăм.
Çав вăхăтра ал-урапа хăлаçлантăм...
Сана ăнсăртран пĕçертрĕм пуль?
Эсĕ качака пек çухăрса ятăн.
Халĕ те, аса илсен, кулас килет.
Сывлăшĕ йăлт тухса пĕтмен пуль?
Сăмса халĕ те кăштах шăхăрать.
Çăвар тĕлĕнче туту мăкăртать.
Пăспа пиçне çĕр улми пек кĕрпекленчĕ.
Çавна çисе пăхасчĕ, терĕм.

* * *

Эсĕ пултăн маншăн çутă уйăм.
Хирĕç каламашкăн çуккă йӳтĕм.
Çав уйра иртет халь манăн вăхăт.
Питĕ лăпкăн тĕлĕрет пек Сăхăт.
Шăнкăр-шăнкăр шыв юхать килнишĕн.
Халь кунта ик кайăк-и иленнĕ?
Сăхăтра вĕçетпĕр урлă-пирлĕ.
Çакă уй пире халь питĕ кирлĕ.
Çакă уй кăна халь халăх куçлă

Ман куҫа кĕтретĕн уҫрĕ...
Ҫав уйра эпир вĕҫетпĕр халĕ.
Иксĕмĕр те пĕчĕк ача халлĕн.
Шăнкăр шыв юхать, вĕҫет ик кайăк.
Ах, чунра темле пур пĕчĕк айăп!

* * *

Тен, ахаль мар ҫанталăк пĕлĕтлет?
Вăл хăй ĕҫне, ҫӳлти ĕҫе пĕлет!
Ах, пĕлĕт айĕнче пĕр ҫăлтăр ҫеҫ ҫӳрет.
Ăна куҫпа пулин те пит курас килет.
Чăн, кĕтнĕ чух килет кĕтни пĕрех.
Ҫĕр-ҫĕрĕпе ҫӳрерĕм те тӳпе хăех
Хăй ăшчикне уҫса кăтартрĕ...
Ман телее татах та вăл хăратрĕ!
Таҫта-таҫта ҫунать ман ҫутă ҫăлтăр.
Мана самантлăха кăна вăл ҫăлчĕ!
Вăл аякра ҫиҫет. Пĕрех кăштах хаваслă.
Халь эпĕ те тĕнче пекех кăшт аслă.
Халь эпĕ те тăрап пуҫа кăшт каҫăртса.
Шутлатăп ҫăлтăр пĕр пуҫласа та
пăрахса.
Ҫиҫеççĕ-ха вĕсем темле пĕлĕтлесен те –
Ман чун та халь вĕсем пекех тетте!

* * *

Ху шутласа хунă сăмаха питĕ шăппăн
каларăн:
Турă, терĕн.
Ҫак вăхăтра Турă тени тĕлĕнтерсех ячĕ.
Турă ҫинчен эпĕ тахҫанах манса кайнă.
Ҫапла каларăн кăна,
Хушша Турă кĕчĕ тăчĕ.
Иксĕмĕре те уйăрса ячĕ.

* * *

Мĕншĕн сивĕ вара, мĕншĕн сивĕ?
Çил çинче пуль эпир, çил çинче!
Телейе пулинех сивĕ çилĕ те сисрĕ –
Çил вĕрет пĕтиччен, мĕн ирччен.
Çăлтăрсем пуç çинче çунчĕç-çунчĕç.
Мĕн каларăм сана, ас тумас халĕ тин.
Калаçу хăй çипне çăмхаларĕ те сӳтрĕ,
Тепĕр хут тĕртейместĕн саттин.
Пур унта каламан сăмахсен чăн ялтравĕ.
Пур алсем пĕр-пĕрне хăраса шырани.
Палăрать куçунта шухăшсен чăн
пăтравĕ.
Тен, шутлан. Кирлĕ мар, кирлĕ мар тĕл
пулни!
Эп шутлатăп вара. Миçе утăм-ши юлчĕ.
Телее шутлама кирлĕ мар, кирлĕ мар!
Юлашки утăм пуль... Пурпĕрех пысăк
пултăм.
Виçĕ утăм юлсан та... пĕрех юнашар!
Мĕншĕн сикрĕ чĕре, мĕншĕн сикрĕ?
Çил çинче пуль эпир, çил çинче!
Ман чĕре шăннине сивĕ çил те пуль
сисрĕ.
Çавăнпа вăл вĕрет пĕтиччен, мĕн
ирччен..

* * *

Курса юл мана, курса юл савни!
Кунта мĕн пулни, кунта куç пăвни...
Ытала савни, ытала мана.
Юлсан юлĕ те сывлăшăм кăна.
Чунăм ман унта, ытамра.
Чун тухать, чупать,
Хĕм сапать куçран...

Курса юл мана, курса юл савни!
Манӑн сывлӑша эс сывла туллин.
Эс чуп ту мана, хытӑрах чуп ту.
Тепӗр самантран эп пулмастӑп та!
Тепӗр самантран эс кӑна юлан...
Манӑн куҫ та ҫук, ман тута та ҫук.
Сывлӑшӑм кӑна сан ӑшра,
Куллӑм хӑлхунта янӑрать...
Курса юл савни, курса юл мана.
Кирлӗ мар питех пӑхма хурланса.
Эс телейлӗ чух эп телейлӗччӗ.
Кунта мӗн пулни – турӑсем ҫырни.
Юлччӗр сан ҫумра кулӑсем кулни,
Ҫиҫтӗр куҫунта вӑйӑ выляни,
Курса юл мана, курса юл савни!

* * *

Акӑ тӗнче ҫуталчӗ,
Савӑклӑ кулӑ кустарчӗ.
Ҫутӑ тӗнче туталлӑ –
Тытатӑп та чуп тӑватӑп.
Эпӗ унпа айкашатӑп.
Вӑл ҫил ҫинче кӑшт шӑннӑ.
Эс те сывла питӗ хӑвӑрт,
Шап-шур шӑлна уҫ – шӑкӑрт!
Йӑл кулнӑ чух эс те ирӗл,
Санӑн кулма пур ирӗк.
Кунӗ вӑл чун пек уҫӑ.
Хӑйне кӑтартать уҫҫӑн.
Ӑна чуп тӑватӑп хыттӑн.
Мана мӗн пурри те ытлӑ.
Тӗнче калама ҫук тутлӑ.
Тӗнче халӗ ӗнтӗ ҫутӑ.

* * *

Эсӗ мана ӑнланатӑн.
Тен, ҫавӑнпа та тупатӑн
Манӑн валли сӑмах.
Ху вӑрттӑн кулатӑн, кулатӑн...
Хирӗҫ эп ним те чӗнместӗп,
Ним калама та пӗлместӗп.
Эп тӗлӗкри пек ҫӳретӗп,
Хам чӗререн тӗлӗнетӗп.
Куккук пырса ларнӑ туратӑн
Вӑл халь авӑнсах чӗтренчӗ.
Эс юнасан хурланчӗ,
Эсӗ кулсан – савӑнайчӗ.
Ӑҫтан мӗнле вӑй илсе тухрӗ
Пире ҫакӑ ҫул ҫине.
Санпа тӗл пулаймӑп тенӗччӗ
Ҫак ҫылӑхлӑ ҫӗр ҫинче.
Халь ӗнтӗ юлать асӑнмалӑх
Эсӗ кулни, юнани...
Пурччӗ таҫта юманлӑх,
Пурччӗ пӗр ҫутӑ ҫулҫи!
Чӑшӑл та чӑшӑл пӗр сассӑр
Тем каласа ӳкрӗҫ-ши?
Эпӗр утсаччӗ сӑмахсӑр.
Пулчӗ сӑмахӗ – ҫулҫи!

* * *

Ҫӗр ҫинче эс анчах пуль, чӑнах та.
Каласа тухас ҫук пин сӑмах та.
Ҫухатса ҫӗр хута ыйхӑма
Сан ҫинчен шухӑшлатӑп пӗрмай.
Пурпӗрех эс пӗр вӗҫӗмсӗр уҫлӑх.
Пурпӗрех темле вӑрттӑнлӑх эс.
Ман умра эсӗ ҫулӑмлӑн ҫунтӑн –

Çавăнпа çывăрмасăр çӳреп!
Тепĕр хут пĕтĕмпех ас илетĕп.
Санпа пулнă кунсем чĕрере.
Пĕрле пулнă телейĕн билечĕ
Лутăрканчĕ пулас кĕсьере.
Эп ăна тепĕр хут ак вулатăп.
Шурăмпуç çутипе те... пĕрех.
Эх, кама эп пулать улталатăп?
Куç курсан та курмас пĕтĕмпех!

* * *

Мана никам та юратмасть, терĕ пĕр
хĕрарăм.
Эпĕ унпа çапла калаçрăм:
– Хăвна юратакана кĕтсе ан пурăн.
Тыт та юрат ху!
– Мĕнле вара ун пек?
– Юратакан çын çутă. Çавă çутă
ыттисем çине те
ӳкет.
– Кама юратас-ха вара ман?
– Кирек кама.
– Эпĕ мĕн вĕт-ха, хамăн упăшкана кăна
юрататăп.
– Ай, мĕнле хитре каларăн эсĕ. Санăн
юратăву
ман çине те ӳкрĕ. Манăн та сан
пекех юратас
килсе кайрĕ.
– Ну, юрат, апла, юрат. Тен, сана та
юратĕç?

* * *

Юр пĕрчи пуль пачĕ паллă.
Йывăçăн турачĕ те тăмхаллă!

Ун çинче темле пĕр вăрттăн алăк –
Çут çанталăк вăл хăех пĕр палăк!
Эпĕ халь çӳретĕп йывăç айĕн.
Йывăçсем тăраççĕ тăван майăн.
Ал çине пĕр туратне илесчĕ,
Юр пĕрчи пек вăрттăн ирĕлесчĕ.
Çут тăмха пулса ӳкесчĕ вăрттăн.
Ав, епле ун папкисем тăртаннă!
Çил çинче вĕсем халь питĕ шăннă.
Ман тута çинче кăштах та ăшăн!
Тутлă-тутлă тутанса пăхмалăх
Вăрманта та пур ман пек пĕр халăх.
Çутă-çутă юр выртать çутмалăх.
Юр çăвать, çăвать чуна çумалăх.

* * *

Тĕнче темĕнле виçе пуль,
Тĕнче темĕнле тараса.
Икĕ енче ик чĕре,
Ик мăшăр куç вĕçевре.
Икĕ чĕре чĕтренет,
Икĕ çунат чӳхенет.
Акă, сăмах пăрахрăн,
Хăвăн енне тайăлтартăн.
Ман ĕнтĕ мĕн калас –
Эпĕ кун пек те хавас!
Эсĕ йăл-йăлл! кулатăн,
Эпĕ куççуль кăларатăп.
Эсĕ, тен, вутлă вутăш,
Куççульпе кулă хутăш.
Тен, çавăнпа тараса
Ĕçлет хăйне майлă расна.
Эсĕ ларан куç пăвса,
Эпĕ ларап хăраса.
Тĕнче темĕнле виçе пуль,

Тĕнче темĕнле тараса.

* * *

Тĕнче темĕнле идилли.
А, эпĕ вара, чунилли!
Таçтан пек пăхатăп... Лăпкă.
Унта питĕ ырă çынсем.
Чупаççĕ хаваслăн пĕчик ачисем.
Эп хам та пулса пек вĕсен куллисем!
Анчах та, пĕлетĕр, эп чунилли.
Тĕнче вара – темĕнле идилли.
Ăна ман ватас пулать-и?

* * *

Эпир çухататпăр...
Паян, ак, çухатăпăр пуçĕпех!
Мĕн-ма савăнатăп, пĕлместĕп пачах.
Куççуль эс тăкатăн... Эсĕ ухмах!
Лайăх-ха тенĕ, çухалнă пулсан.
Кăштах пуль лăпланĕ çĕкленнĕ тусан.
Çук, иккен, çук. Тусанĕ чунра.
Эп сана сутрăм пулас пуçласа.
Эп упраймарăм... Куç ÿкрĕ, пĕлеп.
Ыррах маррине те сисеп.
Тин çех-ха тасаччĕ, тин çеç савăшу
Çиçетчĕ хĕвел пек... Халь тавлашу!
Халь çитрĕ çав вăхăт...

* * *

Аслати пек кĕрлет, çиçĕм евĕр çиçет.
Вĕçне янă хĕрĕх пилĕк хĕлĕх –
Халь çавсем шартлатса çурăлаççĕ.
Тăсса янă пĕр хумĕ чупать-ха.
Халь çитсе, халь çапать çурăм урлă.
Пулчĕ çав пĕр хаваслă, пĕр хурлă –

Çав тĕлтен сиксе тухрĕ ман турă –
Çулталăк вĕçне янă чăпăркка!

* * *

Хăш чух пăхкаласа çӳретĕп
Çынсем мĕнле пурăннине.
Унтан, çӳретĕп те кĕретĕп
Хам пурăнан кил-çуртсене.
Килте те çутă та тирпейлĕ,
Тулти пекех ялан хĕвеллĕ
Пулсассăн хĕпĕртет ман чун.
Апла, пуçланчĕ чăн-чăн кун.
Ăна ман ирттересчĕ тетĕп
Усăллăрах та кăмăлрах.
Кăмăл туни те питĕ пысăк
Парать пуль усă çав кунах!
Ара, вара кулса çеç иртĕн
Йывăр килсен те тепĕр чух.
Е çыннăн кăмăлне килсессĕн,
Çав çын та пулĕ кăмăлчах!
Акă мĕне вăл пĕлтерет –
Хĕвел тухсассăн чун килет.

* * *

Эх, мăнтарăн хĕрупраç,
Халĕ ĕнтĕ мĕн тăвас.
Ирпеле те кашни каç
Пытанса кăна тăрас.

Пĕчĕкех те мар-ха эпĕ,
Пысăках та мар пулас.
Качча каяссăм килсен те
Мамăк тӳшек тутарас.

Акă, чăн та, вăхăт çитрĕ.

Евчĕ ячĕç ман пата.
Алăкран мăнаçлăн кĕчĕç
Мăн кĕрӳпе çĕн хăта.

Майĕпен сăмах пуçларĕç
Тынапа пăру çинчен.
Шырама мана пуçларĕç,
Тупаймарĕç кайиччен.

Эп вара, мăнтарăн хĕрĕ,
Кĕрсе тартăм, çук, мерттес.
Çӳпçере тупас-ха терĕм
Пытанмалăх пĕр кĕтес.

Пĕчĕкех те мар-ха эпĕ.
Пысăках та мар пулас.
Качча каяссăм килсен те
Кравать айĕнчен тухас.

* * *

Хĕвел ура пуснă çĕрте
Çӳрерĕм паян кунĕпе.
Эп пултăм юр кайнă хирте,
Çӳрерĕм хӳме хĕррипе.

Ăçта ура пуснă тĕлте
Юр кайрĕ, йăлтах, пĕтĕмпе.
Тĕл-тĕл хура тухнă çĕрте
Калча хускалать пĕвĕпе.

Кĕлт çеç-ха шур тĕслĕ вĕлтрен
Пуçне кăларать майĕпен.
Хура вăрманта пĕр серте
Тухса пуль юман кутĕнче.

Хӗвел ура пуснӑ йӗрпе
Ҫӳрерӗм ҫапла кунӗпе.

* * *

Эс пур чухне те тӑр пӗччен
Ҫӳреттӗм ҫӗтӗлсе, пиччем.
Тӗлне килсен, хутран-ситрен
Сурсах ятлаҫнӑ пуль питрен.
Ятлаҫнӑ, чӑн та, мӗн калан?
Мӗн пулнине мӗн пытаран!
Манран тӑвас тесе арҫын
Сапсах тӑраттӑнччӗ краҫҫын.
Эх, тӗлкӗшеттӗм те вара!
Хыпса илсе ҫунмасӑрах
Хӗрсе каяттӑм чунӑмпа.
Хирӗҫ тӑраттӑм пур вӑйпа...
Ак, халь ӑнлантӑм. Ку чухне
Пиччен туятӑп чун вӑйне.
Халь тин пӗрмай эп унпала.
Мана халь хӑть эс унала,
Е кӗлетке пек каскала...
Пӗрех ун сӑнлӑ. Тен, пиччен
Сӑнне пӗлмен эп халиччен,
Тен, калаҫман чун каниччен?

* * *

Эс кам-ха тесе пӑхатӑп.
Куратӑп, пӗр ҫын кӑна.
Анчах паттӑр пек вӑй-халлӑ
Хӑвна тыткалатӑн кӑна.
Ытти ҫынсем пек чаплӑ мар та
Курмастӑм сана малтан.
Халь урӑх арҫын, никам та
Мана кирлӗ мар нихӑҫан.
Хутран та ситрен ыйтаҫҫӗ

Арçын тенисем юратма.
Алран та пырса тытаççĕ,
Ыйтаççĕ хăть тус пулма.
Халь ĕнтĕ эп питĕ телейлĕ.
Пулатăп каллех юратма.
Тĕнче те, эп халь пĕлетĕп,
Пĕлет ман пекех юратма.

* * *

Пĕр сас. Тен, тĕнче сассиех ку,
Таçтан ĕмĕрсем тĕпĕнчен, тен,
Илтĕнчĕ. Пирĕштин пекех туйăнчĕ.
Каçар терĕ. Мĕншĕнне хăй те пĕлмерĕ.
Тен, ытлашши те каларăм. Эп ас
тумас...
Халь ĕнтĕ эп çылăхлă... Çук, терĕм.
Сана итлеме юрамасть. Итленĕ-ши эс.
Тĕнче те ун пек хушмасть, телейлĕ
тумас.
Тен, кирлĕ те мар ку, тен, тĕрĕсех.
Мана итлемерĕç. Пултăр пĕр илтмĕш.

* * *

Паян çу уйăхĕн вĕçĕ.
Чĕкеç те хаваслăн вĕçрĕ.
Тӳпе тĕпĕнчи çутта ĕçрĕ.
Ак, эпĕ те питĕ ĕçлĕн,
Пыратăп утса ура вĕççĕн.
Тӳпе çутине эп те ĕçрĕм,
Ĕçрĕм те йăлт пĕтрĕм.

* * *

Килчĕ те кайрĕ çур уйăхĕн кунĕ.
Шурă çеçкеллĕ садсем çырлара.
Ларчĕ вăрра пуль ку темĕн хăва,

Шăпчăк та çавăрчĕ пĕчĕк йăва –
Тухрăмăр эпĕр чун-халлĕн çăва!

* * *

Чăлтăрт-чăлтăрт! чăлтăртатрĕ
Шур сирень çеçки.
Çеçкисем çинче пуçланчĕ
Пыллă хурт ĕççи.

Кам-ши, кам-ши пырса лартнă
Шур сирень тĕмне.
Кашни çул çĕре пăрахрĕ
Хăйĕн çеçкине.

Хуртсемпе пĕрле пуçланчĕ
Манăн чун утти.
Иртенпе эпĕ хуратрăм
Шурă хут татки.

* * *

Майĕпен, ман пекех майĕпен,
Утса пынă пекех, вĕçнĕçем,
Çунатпа çут шевле тытнăçем,
Сас парсаттăр эсир пĕлĕтрен...
Эпĕ пăхрăм та, пĕр вырăнтах
Тăнă пек туйăнать... Уссăрах
Çĕр туртать пуль чĕкеç чĕрине.
Çĕр туртать те çĕнсе илейми
Вăйпала тĕл пулать çавăнтах...
Çавăнпа вăл вĕçет хăвăртрах!
Вăл вĕçет те парать сассине –
Туй килтерчĕ чĕкеç хӳрине!

* * *

Ахалех пуль арçынсем, чăнах та,

Илĕртӳллĕ Любăшăн çунаççĕ.
Пур пуль çумĕнче, чăнах, юмах та.
Ах, анчах унта вĕт пулаймаççĕ.
Кунĕпех ун пӳлĕмне сукмак та
Чăнласах пулать пуль аслă çул.
Кам кăна унта кĕрсе курман пуль,
Пĕр кĕрсен, тен, каялла тухман та!
Ах, анчах эс кирек тусан та
Люба юратушăн хыпăнмасть.
Уншăн пултăр кăмăллă сăмах та,
Пултăр тата лайăх ал çыру...
Вăл ăна çапса парать пит чаплă,
Шăрçа пек çыхса пырать, чăнах.
Çавăнта пуль чăнласа юмахĕ,
Юрату та çавăнтах пулас.
Ну, юрать, юрать, машинка пултăр,
Çав калатăр юратап тесе...
Арçынсем вара, эс пăхмасан та,
Такăрлатĕç сукмака татах!

* * *

Ах, пуканеçĕм, пукане,
Пырса ларсам пукан çине.
Пырса ларсан, кăшт ман енне
Куç хӳрипе пăхса илинччĕ!
Епле тăп-тăпăл кĕлетки
Тытса пăхма та питĕ меллĕ.
Енчен те чуп туса илсен,
Эс ху та пулăн çут хĕвеллĕ...

* * *

Никам та кĕтсе илмерĕ.
Никам та тухмарĕ хирĕç...
Малтан мĕншĕнне пĕлмерĕм,
Кайран тин чухларăм – тивĕç!

Ман тивĕçĕм вăл, çапла шăппăн
Никамсăр утса пыма.
Кăшт тар тухнăçем, лăпкăн
Пĕр вăхăт канса тăма...
Çапла пуль шăпа, урăх ним те
Каламăп ирпе утнăçем.
Эп хам та вĕçсе иртес пек
Урам тăршшĕпе чĕкеçле!

* * *

Эп урăх пурнăça пĕлместĕп.
Тен, çавăнпа та пит аван.
Аван тесех кулса илетĕп...
Эп урăх пурнăça пĕлместĕп!
Ак, эп паян та килтĕм, лартăм,
Кĕçех ĕçе те кӳлĕнеп.
Мĕн тунипех эп çырлахатăп,
Эп урăх пурнăça пĕлместĕп.
Мĕнле пурнан, тесе чĕнсен те
Аван-ха, тетĕп, майĕпен.
Тĕнче хĕрне çитсе ӳксен те
Эп урăх пурнăça пĕлместĕп...
Пĕрмай пĕр майлă, выльăх пек,
Ĕçлеп, çиеп те çывăрап.
Ун пек тумасăн çылăх пек.
Эп урăх пурнăça пĕлместĕп.
Пĕлместĕп çав, пĕлместĕп эп!
Сăмса кутне тĕртсе парсан та
Ĕлĕкхи пек эп, хама май...
Тен, çавăнпа та кирлĕ мар
Тесе шутлатăп никама та
Çак тĕнчене çавăрттарни...
Эп кутăн-пуçăн хам та пулнă,
Хам пурнăça пăсса та курнă.
Анчах усси... Уссийĕ çук.

Тен, çавăнпа та çиленместĕп.
Эп урăх пурнăçа пĕлместĕп.

* * *

Чиперех пуль, чипер, терĕ
Хĕрупраç çумранах иртнĕ чух.
Чиперри кăмăла килтерчĕ...
Тепĕр чух вĕт çӳретпĕр шух!

Ĕлĕк чух, çамрăк чух, пĕлетĕр,
Эпĕр пулнă чăнах та шух!
Халь вара йлл! кулса та илетĕр
Ас илсессĕн çавна тепĕр хут.

Çак самант та вара пит хитре-çке!
Эс каларăн, чипер, тесе.
Йăлл! куллу çиçрĕ-тĕр чĕрере те
Пит-куçа та чиперлетсе...

Чиперех пуль, чипер, терĕн...
Ман çумран иртсе кайнă чух.
Чиперри кăмăла килтерчĕ.
Япăххи халь – ниçта та çук!

* * *

Ирпе паян пĕлĕт çилхеллĕ.
Çӳлте, тӳпере çиллеслĕн
Вĕрет пуль сив çил, апла...
Кунта вара хăть, хывăнсам!
Асфальт хĕрсе çитнĕ пулас та
Ирпе те чĕр сывлăш çук.
Эп пуснă тĕлте тусанлă пĕр йĕр.
Çав йĕр çине пусрăм эп те!
Кам иртнĕ-ши тетĕп манран иртерех
Ăш çил шăлса кайнă çул тăрăх.

Телей те çапла хитре йĕр пекрех
Йĕрлет пуль пире пĕр вăхăт.
Ак, эп те телей пек, тен, пулăп,
Çав йĕр çине пусăп хăвăрт!
Хитре те уралла çав пĕчĕк хĕртен
Тек урăх нихçан та эп юлмăп.

* * *

Çитет пуль чупса хĕр хыççăн.
Çитет пуль пăхса хĕр çине.
Туяп-ха, куçсем ман выççăн
Пăхаççĕ татах сан çине...
Çитет пуль вĕçсе пĕр вĕçсĕр,
Çитет пуль пĕр ĕçсĕр ларма...
Курап-ха, чунпа эпĕ вĕçрĕм
Таçта çитиех санпала...
Каларăн, ан пыр, эсĕ, терĕн,
Сана юрамасть юратма.
Анчах та пĕр сассăр çитертĕн
Пачах урăх сас ман пата...

* * *

Эп тусан çĕклерĕм утнă чух.
Çав тусан пуль халĕ те тăрать.
Сывлама та йывăр тепĕр чух.
Чун та хăйĕнчен халь хăй хăрать –
Эп тусан çĕклерĕм ним те мар!
Вăл вара çӳлтен çӳле каять,
Хĕвеле те, ак, часах хуплать...
Вăл вара, тухсассăнах, анать.
Ах, турах, çĕклерĕм эп тусан.
Тен, утма та кирлĕ марччĕ ман.
Пуснăçем, татах вĕт çĕкленет!
Халь кама тата вăл пĕтерет?
Тăр-ха, тăр! Пит ан васка, Мишша.

Уруна эс çĕклесен – тăхта!
Пит тусанлă çул ку, эс ăнлан.
Пуссанах, каллех тухать тусан.
Эс унпа, çĕкленĕ урупа,
Майĕпен çеç ирт-ха çулпала...
Кустарать ку çăмарта вара,
Çапларах калаччĕр урамра.
Çăмарта пек кустарса пырсан,
Тусана çапла хускатмасан,
Йĕрĕм те юлмасть вара...

* * *

Çын нихçан та чечек пек
Курăнман пуль, çавăнпа та,
Тен, чĕри пуль пĕчĕк те
Пит черченкĕ халĕ те...
Ах, чĕри вĕт курăнмасть.
Ыратсан та сас памасть.
Ăт, тута тесен вара...
Вăл пăхма та чăнласа
Чечек майлă пулмалла.
Сас парсан та, чуп тусан та
Туйăнать – чечек кунта.
Тен, татан та савăнса...
Татнă чух вара тăран та
Йăлт чечек санăн тавра...
Çын чечек пек пуçĕпех,
Татса илĕн пĕтĕмпех!

* * *

Тĕлĕнмелле пĕр пулăм –
Паян мĕлкеллĕ пултăм.
Ĕнер те, виçĕм кун
Тухсаччĕ пулĕ чун...
Ун чух пĕр вĕççĕр çумăр,

Ун пек чух сывлăх сунăр.
Шăнса вилеттĕм чут.
Ак, халь те сивĕ чуть.
Сивĕ пулсан та çутă,
Хаваслăрах пек утăм.
Пăхатăп та – малта
Мĕлке тапăлтатать.
Мĕлке манран та вăрăм,
Темле пĕр тĕслĕ – хăрăм
Пулса, тен, хăратать,
Тата хыт хускалать...
Ёнер, тен, чунăм тухнă,
Тен, пурнăç манăн хухнă?..
Пит çавăн пек мĕлке
Пĕтмесĕр çук ĕнте...
Тĕлĕнмелле пĕр пулăм –
Хĕвеллĕ пулчĕ кунăм.
Тен, çавăнпа эп çук?

* * *

Çак самантран пуçлатăп пурăнма
Чăн-чăн чăваш пулса.
Пит çăмăл мар пулать çакна тума,
Тĕнче хирĕççине курса тăрса.
Чăваш, тен, кирлĕ мар халь никама та,
Вăл майĕпен çеç çухалса...
Çапах та кирек мĕн пулсан та
Эп кайăп çĕр çинчен чăваш пулса.
Çапла тума ыйтать манран мăн Турă.
Çав çеç халь çылăх мар тесе калать мана.
Чĕре тесен, чĕре те питĕ хăйне майлă
Ак, чарăнса тăрсах тăнлать çавна.
Çук, хăрамасть вăл, хăраса та мар.
Пит пысăк ĕç кĕтет тесе кăна

Вăл такăнса илет йĕркесерен...
Çырнă чухне те такăнать пулсан вара,
Мĕн тумалла тет çакă пурнăçра?
Сана, чăваш, йăлтах ватать вăл
çакăнтах.
Çак самантран пуçлать сана ватма çак
пурнăç!
Ватсан вара, юлать пĕр нимĕр çеç
санран.
А, тен, çав нимĕр, нимрен те тунăскер,
Халь тин туять хăйне чăн чăвашран
чăваш!
Эп хăрамас хама йăлт нимресрен.
Чăваш нимри вăл тутлă пулаканччĕ.
Ăна çисе вĕт ӳснĕ ачаран.
Хăш чух вĕт çăкăр та пулман.
Нимри тесен вара пыра ларман.
Пулатăп нимĕр пек çак самантран!

* * *

Çĕрпе пĕлĕт хушшинче,
Çĕр кăвапи тĕлĕнче
Патша пекех çӳретпĕр.
Çутă тĕнче пĕтĕмпех
Пиртен пулнă – пĕлетпĕр.
Çавăнпа та чăн чăвашăн
Пĕлĕте тытса тăраслăн
Вăй-хал пуррине сисетпĕр.
Халь те, акă, улăпла
Курăнма вĕт пултаратпăр.
Кунĕпе суха тăватпăр,
Тыр акса вырса илетпĕр.
Уявра сăра ĕçетпĕр.
Турăсен шерпечĕ вăл.
Вăхăта кăштах тăсать,

Çула тухсан кĕскетет.
Сăра сакки сарлака –
Ларса тухăр тăванпа!
Хĕвелпеле уйăха
Тав тăватпăр йышпала.
Юр юрлар-ха савăнса...
Çĕрпе пĕлĕт хушшинче,
Çĕр кăвапи тĕлĕнче
Чăваш пулса çӳретпĕр.
Çутă тĕнче пĕтĕмпех
Пиртен пулнă – пĕлетпĕр.

* * *

Хăш-пĕр тĕлте сар çулçă курăнать.
Çав çулçă та сас панăн туйăнать.
Пĕр курăнать вăл çулçă хушшинче,
Пĕр пытанать ним çук пек çил çинче.
Çав çил çинче тăратăп хам та эп.
Сив çил вĕрет, çурçĕр енчен вĕрет.
Эп ĕнтĕ ĕнтĕркерĕм çулçă пек.
Пĕр курăнатăп пек тухса балкон çине,
Пĕр пытанап кĕрсе тарса çил уççинчен.
Ышша пулать çав ӳтсене те кăшт.
Ăшша вĕреннĕ те – кĕрсен пулатăн
лăш.
Ак, çитрĕ кĕркунне, шутлатăн майĕпен.
Çав çулçă пек туян хăвна та, тен.
Мĕн-ма тивет-ха вăл чуна? Пĕр çулçă
çеç вĕт!
Епле шăтарасла пăхать тата. Эс кĕт,
тет.
Эп паллă патăм. Хĕл Мучи килет.
Чĕрри мĕн пур – пĕтĕмпеле пĕтет.
Çав чĕтретет пуль ман ӳте, сив мар.
Ун пек, тен, пурăнма та кирлĕ мар!

Эй, сарă çулçă, эсĕ сивĕ хĕл элчи,
Мĕн-ма эс сарăрах ыттисенчен?
Куçа ма улталатăн пит хитрен. Вилĕм те
Çак пурнăçран пуласшăн-ши хитре?
Тен, ун пек мар. Тен, эпĕр çеç. Акă, иккĕнтен
Пытанмалла вылятпăр майĕпен.
Пĕр курăнать сар çулçă çил çинче,
Пĕр пытанать. Ним çук пек. Акă, пĕринче
Талса та ӳкрĕ пулĕ çĕр çине.
Пăхатăп та, куратăп. Çулăм хĕрринчех
Халь-халь таптанас пек выртать вăл кунĕпе.
Пытанмалла та выляймасть текех.

* * *

Кĕре ӳтлĕ кĕрхи çанталăк.
Кĕрен тĕслĕ чие çулçи.
Унтанпа иртрĕ шăп çулталăк,
Ун чухне те çаплаччĕ шыв çи.
Вăл тин çеç тăрăлса çитсеччĕ.
Тăрă шыв юххине итлеп.
Çавă кун пĕрре çех килсеччĕ.
Тен, каллех ак тепре килет?
Шăнкăр-шăнкăр шур чуллă валакăн
Чăлтăр-чăлтăр сикет шыв сикки.
Шыв çи тăрăх, калăн, шур акăш
Юхса кайрĕ, шур кăпăк пекки.
Çырма тĕпĕ тӳпе майлă тарăн.
Тем те пур пуль унта, чăнах!
Акă çил шыв питне хускатрĕ,
Пĕркеленчĕ шыв пичĕ кăштах.
Пĕркеленчĕ те ватăлчĕ, тейĕн.

Ним те çук пек çухалчĕ тĕнчи.
Çилпеле килсе ӳкрĕ чиейĕн
Кĕрен тĕслĕ хитре çулçи.
Шыв сикки тĕлĕнче капланчĕ.
Юхаймасăр тăрать çырма!
Пĕр кана вăл çапла асапланчĕ,
Асапланчĕ те кайрĕ юхса...
Кĕре ӳтлĕ кĕрхи çанталăк.
Кĕрен тĕслĕ чие çулçи.
Унтанпа иртрĕ шăп çулталăк
Ун чухне те çаплаччĕ шыв çи.

* * *

Кам калама пĕлет, ман чун шăнкравлă,
Ăна кам курнă-ши çапла кăшт хускатса.
Кăшт тĕртнипех вăл чăнкăр-чанкăр,
Темле сас кăларать чуна савăнтарса.
Ăçтан-ха чун çапла шăнкăравлă пултăр.
Сасси тата мĕн-ма ытла черчен.
Ун сассине эсир илтсе халь куртăр.
Апла, сирте те вăл халь кăштă янăрать!
Ак, янăрать каллех. Алла тăсап та, шăн пек
Пулса тăрать пĕр вăхăт ним те мар.
Иккен ман чун та мар янрать шăнкрав пек.
Шăнкрав пек янăрать-мĕн пĕр телефон анчах.
Çав телефон та ман чун пекех-мĕн чунлă.
Епле-ха вăл пултарчĕ вăратма мана?
Тахçан хытса-хытса та ларнă кунăм
Аса килет пек халь каллех мана.
Тен, çав куна вăратрĕ пуль шăнкравăм,
Тен, пулчĕ чун юрри çавна хуравăм?

Пĕрех, кирек мĕнле пулсан та чун
сасси,
Çав телефон пекех туйнать халь
пуласси.

* * *

Мĕнле пурнăç килсе тухрĕ ку?
Кун кунлама та, çывăрма та çук.
Куçа хупсанах усал тĕлĕк килет.
Кăнтăр тĕлĕнче пулатăн шăна пек.
Мĕне пĕлтерет ку, мĕнле япала?
Хама хам чăтайми пултăм-ши вара?
Кашни сăмах каламассерен кăнн! пăхап.
Тепĕр каласан тытап те çурап.
Ах, турăçăм, пар чăтмалăх вăйна!
Чăх çăмарти пек çурăлсан вара
Кăлăп валли чĕппи те çук пулсан,
Юхса тухать пĕр çăмарта сарри...
Унтан тĕнче тăваймăн эс, Сарри!

* * *

Çак вăхăтра, пĕлетĕн,
Пĕр хĕрĕх çул калла
Каятăн та килетĕн
Ачалăхри яла.
Ун чух шкула чупаттăм.
Çапла таса пĕр кун,
Пит лайăх ас тăвап,
Çиçсеччĕ манăн чун.
Мĕн-ма тесен те паллă.
Тен, пит паллах та мар.
Хама эп туйнă халлă.
Тен, чупнă çиле май.
Çук, çук, темех ан шутлăр –
Пĕр пĕчĕк çеç телей.

Алра ман çимĕç, куртăр –
Ăна çиес килет!
Çапла, çапла вăл пурнăç
Питех выçса çитсен,
Пĕр помидор пек курнă –
Вăл халĕ те пиçмен!
Пиçсе çитмен те пурпĕр
Кĕрхи куна хавас.

* * *

Тек пĕр кун та ахаль ан ирттĕр.
Мĕн шăтарса тухнă чун витĕр,
Çавă ăс уççи те пултăр.
Çавна çын та куртăр.
Апла, çыр. Çын курмалла та çыр!
Çурхи шыв çурнă çĕре якатсах эс пыр.
Çырнă пĕрне вуласан çын пултăр.
Çырнин кăшт усси те курăнтăр!
Сăмах калама тивĕç çук тесе ан тăр.
Ĕнтĕ сан та сăмах калама вăхăт-тăр.
Пĕр каламан сăмах, тен, каланмĕ те...
Эсĕ туман ĕç çапла, тен, çухалĕ те...
Çак самантра мĕн тума май килнине
ту!
Çав пĕр самант пек туйса тăр хăвна ху!
Чун витĕр мĕн тухнă, ăс уççи те
пултăр.
Тĕнчере эс пуррине Турă та куртăр.

* * *

Эп пĕлместĕп ĕнтĕ, тем пулать паян.
Ирхи шурă юр та, ак, выртать аран.
Пуçласа пуль çурĕ, пуçласа каять.
Çакă пулăмран та ытла мĕн пулать?
Шутласа пыратăп, юрă янăрать.

Вăхăт та вилмешкĕн çывхарса пырать.
Ик енчен те, акă аяк ыратать.
Пурăнмалăх сывлăх ĕнтĕ те юлать?
Шур юр çăвать те савăннăн пулап.
Шурă юрпа ӳтĕм ман та çăвăнать.
Пит йывăр пулсан та чунăм таврăнать.
Шурă çăмăл юр пек çӳлтех çаврăнать.
Çаврăнса илет те майĕпен ӳкет.
Ӳкнĕçем пĕрре çех ялтăрса илет.
Ялтăрни вăл мĕн-ха, вăл вĕт ним те
мар!
Савăнмалăх çеç вĕт. Çăварна ан кар!
Хам та вĕт сисмерĕм, илтĕм йăлл!
кулса,
Çăвара карса та шур шăл кăтартса.
Нивушлĕ вара çав, шурă юр пĕрчи,
Пĕрре çаврăнсах-ши турĕ шăл шурри?
Çутă çеç те мар пуль. Юр пĕтни тем
мар.
Çулпа утнăçемĕн, юр пек кулса яр!

* * *

Хĕвел çутипе мар, çук,
Укçа çутипе пурнакансем,
Илтетри эсир ирхи сассене?
Куратри эсир хĕвел куллине?
Чунсем те епле çуталса пынине?
Çукрах пулĕ çав. Çукрах кăна мар.
Пĕлместĕр вĕт эсĕр тĕнче мĕнлине.
Тĕнче эсĕр курнă укçа та мул мар.
Тĕнче вăл, пĕлетри, вĕр çĕнĕ сăмах.
Ăна калакан вăл хăй те çăтмах.
Вăл хăй те, тен, Турă. Калать те
кулать.
Кулли хĕвел евĕр çап-çутă пулать.

Пăхсан çулçă витĕр куратăн хăвна.
Вĕт эс те çӳренĕ çав çулçă тавра!
Сăну, пăхнăçемĕн, çемçелнĕ çу пек.
Сĕткенĕ те унăн ӳтри юн пекех.
Çав çулçă çутиллĕ, çав кулă ăшшиллĕ
Пуласчĕ те çав çакă çут тĕнчере.
Ненай çав, пĕлместĕп, тен, вăйăм
çукран,
Тен, эп те çӳретĕп укçа çутипе?..

* * *

Кун пек пурăнма май çук...
Кун пек юрату та çук!
Пулас-ха тесеттĕм телейлĕ,
Кунсем те тăратчĕç хĕвеллĕ...
Халь ĕнтĕ ман нимĕн те çук.
Халь ĕнтĕ хĕвелĕм те çук!
Çăвать кунĕпех çумăр.
Куççуллĕ ман чун та, курăр!
Сăмах каламалăх та çук.
Савни те ман халĕ çук.
Пĕр çулçă, пĕр сарăхнă çулçă
Турат тăрринче çеç юлнă.
Мĕн-ма-ха ман нимĕн те çук.
Кулмалăх тута та вĕт çук!
Пулсаччĕ тахçан ман пурлăх.
Халь юлчĕ пулас пĕр хурлăх.
Çук, çук! Халь тин пĕтес çук.
Мĕн пулнă, йăлтах эп çухатнă –
Чуна çавăнпа, тен, сыватнă?

* * *

Эп сана ас илме шутламан та.
Халь вара ас илетĕп пулать.
Аса илтĕм те кăмăл çăлкуçăн,

Чĕрере – юн тапма пуçлать.
Эс çапла пулнине эп пĕлмен те.
Эп шутланă, мăнтарăн ача.
Çырнă чух, ак, сана ас илен те
Тĕлĕнетĕн кăна пĕр кана.
Епле ăслăн та питĕ хаваслăн
Сарă çулçă пек тăкрăн сăмах.
Эп вара халь çăтса ярaслăн
Тин çеç курнă пек пăхрăм татах.
Пăхăсăн, тен, пăхсан эсĕ тупăн
Ху валли пĕр çемçе çеç апат.
Тен, шутлатăн халь пĕр ăнланмасăр
Калаçса та пуль халь çитет.

* * *

Кĕркунне, кĕркунне...
Эп пĕлмен те,
Килсе выртнă-мĕн кил умне.
Пĕлĕтре, пĕлĕтре
Çурхи тĕслĕ тĕнче.
Çуркунне, тен, чăнах та пĕтмен те!
Çурхи пек тĕрлĕ тĕслĕ тĕнче.
Çурхи пек халь шăнтать.
Ирпе пынă чухне пĕр кӳлленчĕк
Кантăк ватнă пек пачĕ сас.
Кĕркунне, кĕркунне...
Çурхи пек тĕкĕрленчĕ тĕнче.
Халь хăшне-ха илен чун çумне?
Тĕкĕрленнĕ пек пулнă тĕнче
Илĕртет те чĕнет хăй çумне.
Пĕр кӳлленчĕк умра.
Утса каçăттăм эп.
Сарă çулçă чарать.
Вăл вара кĕр кунне çеç пĕлет.
Утса кайăттăм эп, çуркунне ку тесе.

Çут кӳлленчĕк пĕлет.
Тĕкĕр пек çутатсан та тĕнче
Çуркунне пекки пурпĕр пĕтет.
Кĕркунне халь килет.
Чун вара пурпĕрех тем кĕтет.
Кĕрхи кун варринче çур çӳрет.

* * *

Кун пекки кĕркунне курманччĕ.
Сап-сарă çулçă вырăнне
Сип-симĕс çулçăпа хупланчĕ
Çулçа кĕтсе выртан тĕнче.
Мĕн чухлĕ çулçă симĕс-симĕс...
Мĕн-ма вăл ӳкнĕ çĕр çине?
Çурçĕр енчен ытла пит сивĕ
Вĕрсе пуль, тейĕн, çур енне.
Вăл шăннă та, аманнă евĕр
Талса анса ура айне.
Хăш чух чĕре те, çулçă тейĕр,
Туять çапла хăй шăпине.
Сивĕ сăмах килсе çапать те –
Вара пĕтетĕн çулçă пек.

* * *

Кунĕсем те ĕнтĕ...
Ват ăшши кăна çав.
Çулçă тĕслĕ ĕнчĕ
Сывлăхăм пĕрмай.
Кунĕсем таса-ха,
Сар хĕвел пăхать.
Ах, анчах тăхта-ха,
Каçпа вĕт шăнтать.
Сивĕ пулнипе пуль
Шăнса пăсăлап.
Шăннăçем тем чухлĕ

Çулçă тăкăнать.
Сарă, симĕс, хĕрлĕ...
Тем тĕсли те пур.
Пурнăçăм ман тĕрлĕ.
Мĕн килет халь – кур.
Чирлĕччĕ ĕнер эп.
Паян, ак, çӳреп.
Кĕркунне ĕнерлĕ.
Кăмăла кӳрет.

* * *

Ирпе тĕлĕнсе пăхатăп –
Хĕвел-мĕн анса пĕтмен!
Е вăл ĕнерех çухатнă
Çутта пуçтарса пĕтермен?
Тен, çавăнпа пит йăвашшăн
Килет халь кăвак çут.
Е вăл пысăк чӳк тăвасшăн
Ĕнер çуннă пек тепĕр хут?
Çапла шутласа эп тăраттăм,
Сисмен те, сап-сарă хĕвел
Такам чăнласах кустарнăн
Сиксе те тухать тухăçран.
Хĕвел тени вăл йĕвенлĕ.
Çыхса хунă пек çĕр çумне
Вăл çаврăнать тĕллевлĕн
Тырра ашнă пек майĕпен.
Ура янăçем, тыр сапнăн
Шевли тăкăнать çĕр çине.

* * *

Каçпа кино çеç куртăм...
Кино пек килсе тухрĕ кунăм.
Майĕпен юр пекех хухрĕ чунăм.
Тем тăвас пек малтан тăрăшаттăм,

Утнăçем тепĕр утăм тăваттăм...
Телейпе тĕл пулсан савăнаттăм...
Кинори пек темле иртрĕ кунăм.
Ас илмелĕх кăна юлчĕ туйăм.
Ĕлĕк чух вăл шыв пек тăкăнатчĕ.
Утнăçем пĕр ури такăнатчĕ.
Пурпĕрех питĕ лайăхчĕ пек.
Кинори пек иртет пирĕн пурнăç.
Çырмасем – эпир утнă çул урлă –
Çын сиксе каçайми ӳссе кайрĕç.
Тилĕсем пуль унта халь çӳреççĕ,
Телее халь çавсем пуль пĕлеççĕ...

* * *

Иртрĕ пулĕ пурнăç, иртрĕ çуркунне.
Хăва çути çĕтрĕ, ӳкрĕ çĕр çине.
Майĕпен вăл сӳнчĕ пурнăç иртнĕçем.
Хăва мĕлки çуккă, çуккă юррисем.
Кĕскелсех-мĕн çитрĕ юрату тăхри.
Халь хăви те çуккă, çуккă çут йăви.
Тен, каллех килесшĕн кайăксем кунта.
Анчах эп пĕлместĕп кайăк пек пулма.
Чĕлхе вĕçĕнче те тек сăмахăм çук.
Хăва çеçкине те тек татассăм çук.
Юрату пĕрре вăл пурнăçра килет.
Пĕтнĕ çеç хăва та вĕт çавна пĕлет.

* * *

Тĕнче усал мар.
Тĕнче ыр та мар.
Кам ырă-усал тет,
Пĕтет.
Ак, кунăм килет.
Ман кăмăл килет.
Тĕнче те пĕлет!

Тĕнче питĕ тĕрĕс,
Тĕнче тĕкĕр пек.
Ак, пăхрăн усаллăн.
Тĕнче те пăхать,
Мана ăнланмасть,
Çапать те ярать.
Тĕнче абсолют пек.
Тĕнче тĕкĕр пек.
Мĕнле кăмăллатăн –
Çапла тĕкĕрлет.

* * *

Кун пекки пулманччĕ-ха.
Çывăрсах курманччĕ-ха.
Ман ура йĕпеннĕ те
Ăшăнса выртаттăм-ха.
Йăшнă кайнă. Çывăрап.
Урамра йĕпе тăрать.
Çавăнта эп çӳресе,
Урана кăшт йĕпетсе...
Кайран пăхрăм та пушмак
Шăтса тухнă-мĕн, нихак!
Эх, ухмах, эс. Эх. айван,
Шăтăк пушмак ма тăхнан?
Çапла вăрçрăм та хама,
Кĕрсе выртрăм çывăрма.
Эх, çыврап та çывăрап...
Урамра йĕпе тăрать.
Ура ăшăннă пулас –
Халĕ урама каяс!
Каясси пулмасть пуль çав.
Çăварне карать пушмак.
Выртнă-тăр пушмакăм та!

* * *

Ирпе шурă юр çунă...
Çăвать-ха вăл халь те чунра.
Çӳлте, пĕлĕтре тем пулнăн
Çӳрет пĕр чана явăнса.
Сасси те ытла питĕ хурлă,
Темле чун çурса каласла.
Вĕçет вăл халь айĕн-çийĕн,
Темле ача пек пуласла.
Ачи те, чăнах та, ĕнтĕ.
Чана евĕрех çухăрать.
«Каймастăп нихçан та тек эпĕ,
Килте ман тетте çывăрать.
Каймастăп нихçан та эпĕ,
Каймастăп ача садне...»
Анчах та унран та вăйлă
Ун амăшĕ пур пулмалла.
Юр çунă шур çул тăршшипе
Хура çеç ик йĕр юлать...
Юлать тата питĕ хурлă
Темле чана евĕр сас.
Тен, чăн та, çав кайăк пуç урлă
Халь ĕнтĕ вĕçет те каçать...

* * *

Шур юр çуса тасатнă кун
Чăнах та çутăрах пек чун.
Кирек мĕнле асап килсе хуçсан та,
Халь ĕнтĕ юр пекех таса пулан та
Нимех та мар пек туйăнать тĕнче.
Çиçет пек кулă унăн питĕнче.
Ӳтне те витнĕ, курăр, шур пирпе.
Тин çеç вăл тăнă çывăрса ирпе.
Епле таса вăл курăнать. Юртан

Шур кёпине хывмасть пуль паянтан.
Тен, çавăнпа эп хăрамас нимрен те.
Юр çунă чух ача пекех çӳрен те...
Сана та вĕт хуплать çав шур пирпе!
Пăхас килет вĕт ман та шур питпе –
Унтан пахи те çуккă çĕр çинче.

* * *

Ни юр, ни шыв, ни пылчăк...
Чунра та, кур-ха, хыльчăк.
Утса тухма май çук.
Ача чухне çапла выçсан та
Çиеттĕмĕр тыр сăвăрса.
Васканипе пуль тырăпа
Çăтса яратăн хыльчăка.
Вара тем чул сурса ларсан та
Тухмасть вĕт хыльчăк сан ăшран.
Ыраттарать тата вăл хытă,
Канăç памасть сан ăс-тăна.
Çапла, ак, халь те вăрттăн хыльчăк
Кĕрсе ларса пуль ман ăша.
Ни юр. ни шыв. ни кĕрхи пылчăк
Тек кирлĕ мар пуль ман чуна.
Ним мар пек халь сурса пăхатăп.
Сурчăк тухмасть. Çук хыльчăк та.
Анчах тем ларнă пек карланкă
Хăрăлтатать... Хăрарăм та.
Çăвар уçса пăрахрăм та.
Çӳретĕп халĕ хыльчăклă,
Тĕнче те питĕ пылчăклă.
Иртет пуль тетĕп ыратни,
Килет пуль тетĕп хĕл тени...

* * *

Эрех ĕçсе çитет те пулĕ.

Шыв вырӑнне эрех юлсан,
Ҫын вырӑнне эрехҫӗ юлӗ.
Эрех ӗҫсе ҫитет те пулӗ,
Табак туртма та пӑрахас.
Ӑна, ҫав пакӑҫ апата
Хуҫа йытти те тет ҫимен.
Эп йытӑ мар та пурпӗрех
Табак туртса пӑхатӑп-ҫке!
Хӗрсем патне те... Ма каяс,
Чӑн арӑма ма пӑрахас?
Ман арӑмран та лайӑхрах
Хӗр ҫуралман, тет, чӑнласах.
Нумай эп ӗҫрӗм эрехне,
Нумай эп туртрӑм табакне.
Хӗрсем патне те тепӗр чух
Кайса пуль, чӑн та...
Шутлатӑп ватӑ пуҫӑмпа:
Ҫитет пуль сывлӑха пӑсса,
Ҫапла асса та пурӑнма.
Тин пӑрахас та... Ҫутӑрах,
Хӑюллӑрах та пулӑн, тен?
Мӗн чухлӗ тасарах эс ху,
Тӗнче те ҫавӑн чухлӗ ҫутӑ!

* * *

Парӑнмасӑр, пуҫ таймасӑр
Май ҫукрах пуль ку чухне.
Халь пурне те парӑнтарнӑ,
Халь эпир ҫын аллинче.
Ҫын тени вара усал-ҫке,
Вӑл вӑрҫать тур ячӗпе.
Вӑрҫнӑҫем чунне пӑсать те
Ӳстерет усал йышне.
Эп те, акӑ, парӑнатӑп.
Мӗн тума тет халь ырри?

Усалпа эп çаврăнатăп,
Çăварта укçа юрри.
Пар укçа, тесе пăхатпăр
Укçа пухнă усалтан.
Тепĕр чух çула тухатпăр
Хамăр та разбой тума.
Хамăра вара, шутлатпăр,
Парăнмастпăр паянтан.
Чунĕ пĕтнĕ çын тăрлавсăр,
Ăнланмасть. Шутлать кайран.
Чиркĕве кайса лартатпăр
Темĕн пысăкăш çурта.
Кĕл туса кăштах тăратпăр.
Пулчĕ те... Вара таса.
Пит йĕркеллĕ çын пекех
Курăнатпăр та каятпăр
Разбойпа укçа тума...
Парăнмасăр, пуç таймасăр
Пурăнасчĕ ку чухне.
Парăнтарнă çут çанталăк
Пыраймасть чĕре патне.

* * *

«Хуркайăксем карталанса кайрĕç
кăнтăра...»
Тăвансемĕр, ас тăватра, эсĕр çак юрра
Юр юрланă вăхăтра та ас илер
иртнисене,
Кайăк вĕçнĕ пек иртеççĕ пирĕн
кунăмсем.
Кайăк чунлă чăваш пулнă мĕн
авалтанах.
Çеçенхир те пирĕн пулнă тинĕс таранах.
Çурхи ăшă кунсенче те симĕс çаранра
Эп кĕтӳ кĕтсе çӳренĕ хам та çавăнтах.

Юр юрланă чух ас килчĕç çуллахи
кунсем.
Çăвăн тăршшипе вĕт чупнă вăрмана
эпир.
Курăк йăтнă, çум çумланă, вырнă
тыррине...
Хура кĕр килсен итленĕ кайăк юррине.
Хуркайăксем карталанса кайччĕр
кăнтăра.
Тăвансемĕр, эпĕр вара юрлатпăр кăна.
Пĕр карта ларса тухсассăн, юрă
çуралать.
Юрăра пуль чăваш хăйĕн чăн çулне
тупать.

* * *

Шутлама пăрахрăм. Шутламастăп та.
Ним те кирлĕ мар тек. Шырамастăп та.
Тахçан тупнă пулнă. Хунă. Маннă та.
Куç тĕлне пулсан та куç курмасть вĕт-
ха.
Юратас тесеттĕм. Юратмалăх çук.
Çилленес тесеттĕм. Çиленме те çук.
Нимĕн те пулман пек ман чĕре тапать.
Çут тĕнче хăй майĕн çаврăнать.
Вăранасчĕ тетĕп. Вăрансан вара?
Вăрансан та вĕт-ха ним те çук тавра.
Таврара çуккишĕн ма-ха хурланас
Ăт, хăвра пулсассăн – савăнас!
Çук, пулмарĕ пулĕ ĕç тăвас тени.
Ĕçĕ тупăнсан та алă тек пымасть.
Иртрĕç пулĕ хаклă, шутлă самантсем.
Халь тем пек кĕтсен те тек килмеç
вĕсем.
Шутлама пăрахрăм – шутăм çуккипе.

Шырама тухмарăм – юлташ çуккипе.
Хăть вилме выртасчĕ – вилĕм те
килмест.
Халь вара, атьсемĕр, мĕн тата тăвас?

* * *

Мĕнле пулĕ вăхăт чунĕ,
Хамăртан кăна килет.
Пĕр кана вăл хăвăрт чупĕ,
Кĕтнĕ чух вара вилет.
Сăнĕ ун, чăнах, ик енлĕ.
Пĕрре пăхĕ сивĕ куçлăн,
Тепринче сап-сар хĕвелĕн
Чарăнусăр ир те каç.
Вăхăт вăл темле пĕр каçă.
Çурхи шыв ун айĕнче.
Пĕринче шуса эп каçрăм
Пĕр енчен тепĕр енне.
Леш енче унта типсеччĕ,
Тапса тухнăччĕ çерем.
Çавăнта эпир килсеччĕ
Ушкăнпа çăмха пеме.
Эх, вылятпăр та çапатпăр.
Çапнăçем çав вăхăт та
Çăмха пулса тăчĕ те
Вĕçсе кайрĕ çырмана,
Юхса кайрĕ шывпала.
Халь шыратăп эп ăна.
Вăхăт чунĕ вĕт манра!
Хăй вара таçта çухалчĕ,
Те пит хăвăрттăн кустарчĕ,
Те вăл вилнĕ те выртать,
Эпĕр каçасса кĕтет.
Ак, каçатпăр та шуса,
Тытăнатпăр выляма...

Çапнăçем вăхăт тухать,
Çăмха евĕр çаврăнать...

* * *

Икĕ хĕр пĕрчи пур
Пĕчĕк пӳлĕмре.
Вĕсемпе эс пулăн
Ху та çиччĕре.
Шăкăрт-шăкăрт илтĕн,
Килнĕ чух утса.
Сасă пек эс пĕтĕн
Шăппăн сывланса.
Кĕвĕллĕ çак пурнăç
Кĕвĕллĕ сасси.
Икĕ хĕр пĕрчийĕн
Иксĕлмест кулли.
Аллисем вĕт витĕр
Тухрĕç теттесем.
Пĕрисем, ак, вилнĕ,
Теприсем чипер.
Икĕ хĕр пĕрчи пур
Манăн чĕрере.
Вĕсем чĕрере чух
Ху та çиччĕре.

* * *

Тен, юлашки ку сăвă?
Ăна халь кам пĕлет.
Юна темле, тен, сăвăс
Куллен кунах ĕмет.
Лесник ĕни пек сăпă
Паян эп хам та, тен?
Чĕре çинех, ак, сăнă
Такам алли çĕклет.
Ăна тăшман тĕлленĕ.

Сăнни вĕçет, вĕçет...
Çынни темле çилленчĕк,
Пеме кăна пĕлет.
Перет те пит хаваслăн
Кула-кула ярать.
Сăнни вара пĕр сассăр
Мана та тăрăнать.
Пĕрре эп питĕ меллĕ
Муляж пекех пулап.
Тепре хама пĕлмелĕх
Пуçлатăп ăс пухма.
Ăçтан тухать тăшманăн
Çын пĕтермелĕх вăй?
Темле вĕт мухтанмалăх
Пурах вĕт ун та сăй.
Ун вырăнне анчах та
Алли илет сăнна.
Хур кăтартман пачах та
Ăна вĕт пурнăçра.
Юнне сăхмасть вĕт сăвăс –
Чĕри ун çук та-ха.
Алли çырмасть çут сăвă –
Турри паман та-ха.
Тен, çавăнпа та хыттăн
Кула-кула перет.
Чăваш чĕри те ытлăн
Сăвă çырса пĕтет.

* * *

Анăçран та çапать кăвак çутă...
Анăçра та вылять çут шевле.
Мĕн тума халь пире хĕвелтухăç?
Кун унтан-ши вара халь килет?
Çаврăнать-ши вара хĕвелтухăç?
Халь ăçтан-ха вара кун тухать?

Çавăн пек малтанрах шухăш пулчĕ
Ирпе утнă чухне урампа.
Чăн малтан анăçа куç курчĕ.
Унта-мĕн чăнласах та çапла.
Анăçран та шевле тухать-мĕн.
Хĕвел, калăн, ăнлан, çавăнтан
Çутине вăйлăрах та парать пек.
Пĕр курсан юрататăн чунтан.
Анăç килчĕ пуль çав, чăн та,
Анăçри пек пурнатпăр чăлт.
Ун ултавлă çути пăх-ха,
Çĕрĕпе вĕт вылярĕ ялт.
Тен, ясар çак хулан çути ӳкрĕ
Ир çинче çут тӳпе çине
Хĕвелпе тупăшма вăй çитрĕ
Пĕр кана çак хулан та чăнах.
Хĕвел тухĕ те, ак, ним те мар вĕт
Çапса хуçĕ çак хĕрлĕ çутта.
Çĕрĕпе алхассан хырăм-варлă
Чăтаймасть таса çутă ютта.

* * *

Çĕрĕпе çил-тăвăл
Çывăрма памарĕ.
Çавăнпа та кăмăл
Пит ырах пулмарĕ.
Ырă мар çав тăвăл...
Çул çинче куратăп,
Йăмрари пĕр хăвăл
Урăх шăхăрмасть тек.
Çырма урлă карнă
Ват йăмра турачĕ.
Пурнăçри çав, калăн,
Çылăхне каçарчĕ.
Мĕн унта йăлт шурă

Леш çырма енче?
Сăрт çинче пĕр Турă
Ак, тăрать кĕтсе.
Темĕн вăл каласшăн,
Эп пĕлместĕп-çке.
Вăл йăмра туратлă,
Пуçĕ хăвăл-çке.
Вăл камне эп уççăн
Халь чухлатăп пуль.
Вăл ача пулсаччĕ
Йăмра лартнă чух.
Вăхăт иртнĕçемĕн
Вăл та ӳснĕ, тен.
Йăмра пек ӳсессĕн,
Вăл та пĕтнĕ, тен.
Акă, вăл та халĕ
Ман чуна чĕнет.
Çĕрлехи çав тăвăл
Хăй ĕçне пĕлет.
Ах, анчах эп хам та
Ухмах мар та-ха.
Эп хĕрес хывап та
Пурăнап татах!

* * *

Ал лаппи пек çемçе юр çăвать.
Юрпала... кулă та çыпăçать.
Шик! те шик! шăхărать чăтаймасăр
такам,
Чăнласах та паян пуçланать трам-тарам!
Кӳтсе çитнĕ чуна юрпала çунăçем,
Çуталсах-çуталсах пычĕç пирĕн питсем.
Кам калать халь пире тĕксĕм питлĕ
тесе?
Кам курать мĕскĕн пек?

Хула тăрăх утаççĕ çынсем...
Çынсем мар пуль вĕсем?
Çук, вĕсем çут хĕвел ачисем!
Çĕр çине юр пулса килчĕç пуль?
Шурă-шурă юра, чунлă пуль чăнласах,
Çут тесе йышăнать мĕн пур çын.
Юр ӳкет те тĕнче вăранать.
Çул çинче шӳт те кул янăрать.
Çавăн пек вăл ирпе çунă юр,
Унăн хăйĕн çутийĕ пур!
Юр çӳлтен илсе аннă çутта,
Халь чунпа йăтса пырăн утса...

* * *

Кăмăл пулсан килет-ха шухăш...
Шухăш пулсан тытса ĕçлен.
Çапла эпир шутлатпăр шухă
Çĕнĕ çулсем каллех çитсен.
Ăм-ма, тет, кулянма пит кирлĕ
Ик алăра пĕр ĕç пулсан?
Шăпа кутран тапсассăн вирлĕ,
Мĕнех, упаленсех каян.
Е, калăпăр, унта эс выçă,
Çӳретĕн çапкаланчăк пек.
Ун вырăнне, пĕлетĕп, ывçăн
Апат çиетĕн пур чухне.
Эпир ним маршăн çапăçмастпăр,
Пит килĕшме те кирлĕ мар.
Куçран пăхса çынран кулмастпăр,
Эпир вĕт хамăр та çук мар!

* * *

Кам та пулин вуланă-ши сана,
Уçса пăхса чунна, тен, илĕртӳллĕ?
Тухса тăраç чулланнă пек сăна

Тем такама хыт кӳлешӳ е кĕлĕ.

Ак, темшĕн кашни кун эс чĕрере хускалнăн.
Тем кайăк айăплăн пăхать халь хурланса.
Пур мĕн Чăвашра та илемлĕ Джоконда,
Анчах та кулать вăл куççуль юхтарса.

Хăрахлă чунра пĕр хĕлĕх чĕтревлĕ.
Хур хупнă савнин, тен, кивĕ кĕвви
Тинех чĕрере юрлать пек вĕçевлĕн
Юхса та çыхаççĕ пурнăç тĕвви.

Хăш чух тĕл пулсан, эс темĕн каласшăн.
Тен, пĕчĕк телей тапать куçунта?
Чĕнсе пек сана, пĕр утăм тусассăн,
Хупă кĕнеке куран умăнта.

* * *

Эп сана тупсаччĕ, тусăм.
Сана çеç тупсаччĕ...
Пур енчен те хухнă пурнăç
Тулнă пек пулсаччĕ...

Анчах вăхăт хăвăрт иртрĕ,
Иртрĕ вăхăт хăвăрт.
Уйрăлма та вăхăт çитрĕ
Тур каланă тăрăх.

Эс кайсан чăнах та тăлăх, –
Тăлăх-мĕн тĕнче!
Пĕрле чух кăна-мĕн тулăх
Пурнăç çĕр çинче.

Эп сана çухатрăм, тусăм.
Эп сана çухатрăм.
Утма юлнă вăрăм çулăм
Курăнать хăраххăн.

* * *

Йăлтăрр! кăна кулса ячĕ
Сарă хĕвел тӳпере.
Шурă юртан шур кулачă
Хĕл çитерет пире.
Шур кулача сар хĕвелĕ
Пит тăрăшса пĕçерет.
Сар хĕвелпе пĕр тĕллевлĕ
Тĕм те чĕвĕлтетет!
Хамăр та мĕн, тĕв туман-им
Çав кулача «пĕçерме»?
Шурă кулачă – çисен-и? –
Халь те пырать чĕрене!

* * *

Юр пĕрчи те эсĕ манăн,
Çутă шыв тумлам...
Сас пулса вĕçсе каятăн
Вăйлă çил тухсан.

Юр çине хăварнă йĕр эс,
Пĕчĕк тарăн йĕр...
Çав йĕрпе хĕре йĕрлес-тĕк
Тытăн – пĕр кĕтрет.

Шур пас тытнă пĕр турат пуль
Эс çак тĕнчере?
Ман чĕре те, ак, юлать пуль
Çав турат вĕçне.

* * *

Куҫран пăхаҫҫĕ икĕ ҫулҫă:
Сип-симĕс, ҫавракa, ачаш...
Кам вĕсене пĕрре ҫеҫ курнă
Пулать пуль хăй те пит хавас.
Тахҫан пулсаччĕ вĕт пĕр хăрăк,
Хăрса ҫеҫ кайнă пĕр турат...
Такам пырса пит ăшшăн пăхнă,
Такам шăварнă та ăна
Туна каллех, каллех вăраннă,
Кăларнă пĕчĕкҫĕ папка.
Малтан, тен, вăл, кăштах хăранăн,
Кăшт ҫеҫ кăларнă пуль пуҫне,,,
Кайран ак, курăр-ха, епле
Сип-симĕс, ҫавракa, ачаш...
Халь такама та илĕртес пек
Пулать пуль хăй те пит хавас.

* * *

Пĕчĕк чухнех аттепеле
Лартсаччĕ тополь пӳрт умне.
Ҫул иртнĕҫем тăван киле
Килсе курасчĕ тетĕп-ҫке!

Атте, мĕнле халь пурăнать
Эп лартнă тополь урамра?
Ун халь вулли пуль курăнать
Ҫăлтăр пекех – пит аякран...

Вăл мансăрах пуль халь калать
Пӳрт тăрри пек хăй сăмахне.
Шур мамăкне каллех тăкать
Юрас тесе ҫын кăмăлне.

Вăхăт çитсессĕн, кĕр енне
Ват çын пекех пуль сарăхать.
Тепĕр ача ун çулçине
Хĕвел çине тытса пăхать.

* * *

Çырма çап-çутă куçлă,
Мĕлкен курнать йăмра.
Туяп, телей çут пулăн
Ишсе çӳрет унта.

Çыр хĕрринче шур тумлă
Пĕр хĕр ларать пăхса.
Ун умĕнче шур чуллă
Каçма выртать юхса.

Каçма тăрсан та, паллă,
Ури ун йĕпенет.
Сар хĕрĕн çулĕ талнă –
Хĕр çавăнпа йĕрет.

Тăкать тĕнче çут кулă,
Юхать шыв шарласа.
Ак хĕр те çутă пулăн
Ишсе çӳрет шывра!

Шыва вăлта ярап та –
Çут пулă аллăмра.
Тута параслăн тутлăн
Çатăлтатать вара...

* * *

Ман çинче симĕс кĕпе.
Пăрçа сапнă-ши çине?

Атьăр-ха, чĕнеп пурне те
Пахчана пăрçа çиме.

Ах, аннеçĕм, мĕн тума
Панулмиллĕ пахчара
Тупнă теттĕн эс мана
Пăрçа çапнă вăхăтра?

Панулмиллĕ пахчара
Пăрçа çапнă вăхăтра
Кун кăтартнăшăн мана
Тав тăватăп эп сана.

Эп çӳретĕп пахчара
Панулмишĕн савăнса.
Ева та çав вăхăтра
Панулми çисе пăхса!

* * *

Ăçта тăратăп эп, пĕлместĕп:
Те пĕр залра, те чиркӳре...
Пĕр сасă çеç, пĕр сас илтетĕп,
Шур тумлăскер, курап хĕре.

Вăл пирĕшти пек вĕçсе анчĕ
Çак çĕр çине темскер тума.
Вăл чĕм кĕртес пек асамларĕ
Ман кӳтсе çитнĕ чунăма.

Ак хор пуçларĕ, тем каларĕ:
Пулать пуль терĕ темĕн те,
Усал килсе чуна çакланĕ –
Ăна сирме эс килтĕн те!

Татах, татах сассу вăйланчĕ,

Ăна никам та çĕнес çук.
Çак çĕр çинчех çăтмах пуçланчĕ
Залра пĕр хĕр юрланă чух.

* * *

Утма çулăм çăмăл.
Тупăнчĕ пĕр кăмăл.
Алăра пĕр чăмăр
Шурă-шурă юр.

Пур ман вăрттăн вырăн.
Чĕрере вăл ыррăн,
Ăнсăртран тем тупнăн,
Халь те курăнать.

Айлăмра ем-ешĕл...
Çавăнта çăп-çăмăл
Шурă юр пек шурă
Шур путек сикет.

Шур путек сикет те
Сар чечек ӳсет.
Алăри шур юр та
Ирĕлсе пĕтет.

* * *

Шап-шурă юр çӳлтен ӳкетчĕ,
Вĕçетчĕ çил çиппин инçе...
Эпĕ пĕччен утса çӳреттĕм
Çил сассине кăна илтсе.

Сасартăк çил – те кăшт лăпланчĕ,
Те кăшт вăйланчĕ, кам пĕлет.
Хĕл варринчех пĕр шăпчăк анчĕ,
Вĕçсе те анчĕ... Туй килет!

Килет, килет!.. Çурхи туй килчĕ
Сан сассупа пĕрле паян.
Кам хĕлшĕн тăнă – халĕ вилчĕ.
Кам сар хĕвелшĕн – пит аван.

Хĕвел çинех каять халь сасă.
Ăна хуплаймĕ çил-тăман.
Хĕл вăйланса килсен пĕр касă –
Эпир юрлатпăр иккĕн тан!

Вара пурнатпăр шăпчăк майлă
Çурхи куна та юратса.
Хĕле кăна чăтса тухмалăх
Тупасчĕ вăй халь хамăрта.

## Вырăсла сăвăсем

* * *

Что мне милые сердцу звуки?
С колыбели, что пела мне мать.
Может быть они звуки муки
Или радости… Как знать?
Но недаром, наверное, детство
Вспоминается мне как знак.
Те же звуки ведь льются и ныне.
Только автор теперь их не та.
Но все также, как о сыне
Перед сном все печется она…
Постарела она немного.
Слово скажет, молчит невзначай…

Как начнется концерт с экрана,
Превратишьсч в дитё, так и знай!
И польются те звуки снова
Со времен сотворенья как стон.
Словно ты в материнском лоне
Слышишь радости мягкий звон.
Чувашия моя музыкальная,
И отныне ты будешь вовек.
Ты как в детстве колыбельная,
Как бы матери добрый свет.

* * *

Есть ли она судьба, как таковая?
Ведь человек всегда один!
Поведение любого, даже малого
Зависит от того, с кем он един.
С кем, с другом или просто так
Встретится в пути тебе простак.
И теперь судьба двоих, как и твоя
Продлевается до расставания…
А может и на века…
Есть ещё и тени…
И вот от того, чем займутся люди
Встретившись друг с другом
Зависит и твоя судьба!
Сколько их судеб… двух?

* * *

Я не успел пожалеть.
Жалость мне так нужна!
Жизнь такая плеть –
Только своя боль важна.

Я так хотел пожалеть.

Ты шла на холодном ветру.
Руки согнув, готовясь в полет –
Из памяти это я сотру!

Ты мне сказала вчера:
«Я порезала свой палец».
Я тоже нащупал на своей руке шрам.
Опять не успел пожалеть!

С пальца, наверное, капнула кровь.
И в сердце моем такой же порез.
После таких спокойных слов
Боль мне нужна позарез!

На время, на это, хотя бы так
Пальцем твоим под нож встать.
Я не успел тебя пожалеть –
Жизнь такая плеть!

* * *

Ветер подул… Подул сильнее.
Что может быть ветра любвеобильнее?
Ветер щедр,
Но и я как кедр.
Ты задрожала как листочек.
Ты одна. Ты сама как точка.
Как мамина дочка.
Весь мир ты замкнула в себе.
Ты как станция СИ-БИ-ЕС
Посылаешь весточки.
Смотришься, вроде, весело,
Готовая сорваться в штопор.
Ветка не стопор для тебя.
Тебе нужен ветер и не только ветер.

Надо было бы, конечно, одеть потеплее свитер.
А то ты дрожишь и я то же.
Бьемся об ветер дюжий.
Ты как листочек.
А я как веточка.
Но не удержать мне тебя, мой свет.
Если не ветер, то дождь обязательно смоет.
Буду один биться об другую ветку.
Я в обьятиях ветра –
Ты всего света.
.
* * *
За что мне такое счастье
В невообразимое ненастье?
Льет каждый день нудный дождик…
Тебе же нужен другой художник!
Мне бы к тебе чуть прикоснуться
Пред тем как ребенок уснуть.
Мне бы к тебе чуть наклониться,
Чтоб небом немного напиться.
Но ты невозможно неуловима,
Хотя как на ладони видна.
В твоих глазах – звездопад,
Я все говорю невпопад.
Что для тебя расстоянья,
Я слышу, слышу твой стон!..
Ты как дрожанье в мареве поля.
Дело свое божье исполни!
Ты как спелая рожь.
Только не трожь!
За что мне такое счастье
В такое трудное ненастье?
Льет каждый день нудный дождь.
Тебе же нужен другой художник.

* * *

Было сирены пение
И берег в белой пене.
Была первозданная ночь,
Все рассказать невмочь.
Были как чаек вскрики,
Был невозможный риск.
Было так тихо, тихо –
Мир выглядел будто дико.
День превратился в тень.
Руки твои, что плетень.
Цветы, что на балконе
Смотрят на нас в поклоне.
В глазах зажигается солнце,
А на губах вкус соли.
Я искусал тебя в кровь,
Дайте мне только кров.
Любый, любый, любый…
Ты говоришь прилюдно.
Было, было, было…
Что было, уже неизбывно.

* * *

Хорошо под дождём.
Подождём,
Подождём
До прихода поезда.
Весело дождинки,
Как слезинки,
Как слезинки
По лицу то катятся.
Слышен звук вот.
Тук-тук-тук!

Тук-тук-тук!
Будто наши сердца
Так стучатся,
Чтобы мчатся,
Чтобы мчаться
Навстречу друг другу
Поездом судьбы.

## Вырăсларан куçарнă сăвăсем

* * *

Ан вăрат эс ăна ирхине.
Ирхине вăл тӳлек çывăрать.
Шуçăм халь ун уçать кăкрине,
Путăк пичĕ кăвар пек çунать.

Ун минтерĕ халь питĕ вĕри,
Пит вĕри ыйхăри тĕлĕксем.
Хуралса ыткăнаç хул çине
Лента пек ик енне çивĕтсем.

Каçхине çӳрече умĕнче
Васкамасăр итлет шăплăха.
Сăнаса пĕлĕтсен вăййинче
Уйăрать пытанан уйăха.

Çуталса вылякан уйăхпа
Каçăхса юр юрлаç шăпчăксем.
Шуралса вăл пырать тĕс-сăнпа,
Чĕрери ӳсĕнеç сурансем.

Çавăнпа, тен, яш кăкăр çинче,
Питĕнче ирхи шуçăм вылять.
Ан вăрат эс ăна ирхине,

Ирхине вăл тӳлек çывăрать.

* * *

Каç ялкăшать. Пахча çап-çутă йăлт.
Ӳкеççĕ пӳлĕме, ура айне хĕрӳсĕр
шевлесем.
Яр уçăлнă рояль. Хĕлĕхĕсем чĕтреççĕ,
Чун-чĕрепе пĕрле вĕçеççĕ юррусем.

Юрларăн шуçăмчен куççуль эс
юхтарса.
Эс – юрату анчах, тек çук мĕн
юратни.
Мĕнле пурнас килет ун чух сас
пытарса,
Сана, савни, ыталаса йĕретĕп куç
курми.

Иртейрĕ нумай çул пĕр вĕççĕр
тунсăхра.
Каç шăплăхне çурать каллех, ак, сан
сассу.
Ун чухнехи пекех халь вăркăшать
чунра.
Эсĕ анчах – пĕр пурнăç, пĕр эсĕ –
юрату.

Пулман мĕн кӳренӳ, чунра çунан
асап
Пĕр вĕççĕр пурнăçра, тек çук мĕн
кӳлешни.
Çак чĕтрекен саса пĕр иксĕлми
шанап,
Сана савап, ыталаса йĕретĕп куç
курми.

* * *

Тĕл пултăм эп – иртсе кайниййĕ
Çуралчĕ вилнĕ чĕрере.
Савăк кунсен аса илниййĕ
Çемçетрĕ хытнă ăш-чике.

Кая юлса килсен кĕр сăнĕ
Çутă кунсем пулаç кăштах.
Кĕтмен çĕртен кĕрсен çур шавĕ
Ăшра тем çӳçенет татах.

Çапла çилпе вĕлкĕшнĕçемĕн,
Манăç çулсен тулли чунне,
Аса илсе киленнĕçемĕн,
Сăнап савниййĕн сăн-питне.

Уйăрăлсан ĕмĕр курман пек
Сире тинкертĕм тĕлĕкре.
Илтĕннĕçем ӳссе килеç пек,
Сассем сӳнмен ман чĕрере.

Аса илӳ çеç мар йĕр турĕ.
Пурнăç пуçлать халь калаçу.
Çавах сирте чун илĕртниййĕ,
Çавах чунра ман юрату!

* * *

Ма чĕнместĕн? Тен, курмастăн –
çунап.
Пурпĕрех – тĕртсе яр е çума çупăрла.
Юрату çинчен пуль эп санпа калаçап
Эсĕ пур шăтăкла миçе куçлă.

Мĕншĕн хамăн шанманлăхăма

Сӳнтерес мар пӗлмен пек пулса?
Мӗншӗн санӑн чӗнмен шӑплӑхна
Тултарас мар тӗр тӗслӗ ҫутса?

Тен, ун чух эп тӗпрен асӑрхап.
Пур-тӑр ун вӑтанни, савӑк кулӑ.
Юрату ҫинчен пуль эп санпа калаҫап
Эсӗ пур шӑтӑкла миҫе куҫлӑ.

* * *

Эсир, шутлатӑр, ҫут ҫанталӑк
Е кӳлепе, е чунсӑр пит –
Вӑл чӗрӗ сӑн, вӑл уҫӑ алӑк,
Вӑл юрату, вӑл саслӑ – илт.

* * *

Сӳнет мӗн кун – куҫланчӗ каҫ,
Хупларӗ – хурлӑхлӑ тӗнчен
Ҫиттиллӗ сиплӗ пуставне
Сирсе вӑл ывӑтать вӑшт ҫеҫ...

Сӗм авӑр курӑнать пӗр хушӑ
Сив чӗрипе тӗтрелӗхре.
Чӑрмав халь ҫук курма пире –
Ак, мӗншӗн каҫ чуна хӑрушӑ!

**ТУПМАЛЛИ**

1. Пĕр хĕрхенӳсĕр, кӳренӳсĕр пурăн....................3
2. Кăвак каç уçлăхри чиркӳ евĕр……………….3
3. Тăван каларĕ –..................................................3
4. Çак пăрлă çулпа утнă чух……………………4
5. Туту хускалчĕ,………………………………4
6. Йывăç турачĕ çил çинче………………………5
7. Çурма уçă алăк – кĕрессĕм килет..................5
8. Пулă çунатлă хĕр-кайăк……………………...5
9. Çĕнĕ уçлăхра Адам тата унăн юратнă арăмĕ Ева..............................................................6
10. Ларатăп сĕнксе сĕтел хушшинче..................7
11. Çулсем ман çавăнпа пуль çӳллĕ,…………..7
12. Ĕнер те, паян та вилес пек выртатăп............................................................8
13. Алăк урати урлă ура ярса пуснăччĕ кăна .............................................................................9
14. Мĕн каласшăн пулчĕ-ши çанталăк?.............9
15. Ăçта кайсан та такăнатăн,…………………10
16. Юрату вăл………………………………...10
17. Çӳлтен ман çине пĕлĕт анчĕ.......................11
18. Хулара пурăнма хăратăп..............................11
19. Тăпра ăшĕнчен тапаланса тухрĕ те……...12
20. Хĕвел те суккăр куçлă.................................12
21. Тăман тухнă………………………………..13
22. «Тăхра», ят патăм çакă тапхăра................13
23. Паян хĕл вĕçĕн пĕрремĕш тĕлĕнтермĕшĕ..............................................................14
24. Хĕл тăршшĕпех сивĕ тăчĕ...........................14
25. Пăнт-пăнт-пăнт! тумла...................................15
26. Телей çуначĕ пулчĕ пулĕ?............................16
27. Каçарсам, аякра та пулсан,………………..16

28. Утрӑм та утрӑм утма ҫулпала,…………...17
29. Сан чуну ҫын умӗнче ………………………17
30. Чӳречерен пӑхса ларма питӗ кӑмӑллӑ.........................................................................17
31. Кӗрлет сассу ман хӑлхара ӑш хумлӑн-хумлӑн,…………………………………………...18
32. Мӗн чухлӗ хӗрарӑм, хӗрарӑм......................18
33. Шӑнса вилетпӗр пуль, ача?........................19
34. Эсӗ манран тем ыйтрӑн..............................19
35. Атӑл кайман-ха, кӑвакарнӑ кӑна................19
36. Чӑн ҫуркунне нихҫан та чӑлтӑр-р! мар...........................................................................19
37. Тулта шурӑ юр – сив хӗлӗн шур тумӗ.........................................................................21
38. Юр таса мар та, пӑхма та унта..............21
39. Сар вӗрене хӗлӗпех вӑрӑллӑ ларчӗ............21
40. Ҫуркунне тесе калаймӑн,……………………22
41. Самана пире кӑтартрӗ шар........................22
42. Пӗчӗкскер, курпунскер,…………..................23
43. Хуҫрӗҫ те ватрӗҫ ӑна, куратӑп...................23
44. Кӑшкӑрап хурахӑн……………………………24
45. Шур юр ӳкет, юлать ура йӗрри................24
46. Ҫур килсенех ман татӑлать сукмак...........24
47. Ҫутӑ, тӗксӗм, шывлӑ, пылчӑк,……………..25
48. Ҫынна темӗн чул суйсан та………………25
49. Епле ҫемҫе ҫӳлти шур пӗлӗтсем.................26
50. Кам ҫыншӑн хӑйне пӗтернӗ,………………26
51. Пуҫра пӗр ыйту та ҫуралмарӗ...................26
52. Мӑн Атӑл атте те – ӑҫта эс пулса……..27
53. Ача вӑл тараса................................................28
54. Усса пултӑр та сыппа кайтӑр, теҫҫӗ..........................................................................28
55. Вӗренепе пӗрле кашни кун ӳснӗ пулӑттӑм.....................................................29

56. Тухрĕ шăтса курăк пӳрт умĕн...................29
57. Çӳлте шур кутсем вĕçеççĕ,…………………29
58. Кĕсле ту çине хăпартăм..............................30
59. Тĕнче хăй тĕллĕнех,……………………….31
60. Эсĕ мана хăнана чĕнтĕн...............................32
61. Ăçтан пырса кĕчĕ, ăçтан çĕкленет,………33
62. Эпĕ урăх кайăк пулнине сисрĕç çав..............................................................33
63. Ачам, патша пек пулма питĕ хăрушă.........................................................34
64. Шăлан тĕслĕ пулас та………………….........34
65. Çĕрпе пĕлĕт тĕл пулсан çуралч…………...34
66. Ĕнеркаç санпа тĕл пуласран питĕ хăрарăм....................................................35
67. Эпĕ ăна пĕрре кăна мар курсаччĕ-ха............................................................36
68. Пилеш, эп сана палларăм..........................37
69. Эпĕ пĕлмен те, эсĕ каçар...........................37
70. Шыв хĕрри. Шыв хĕрри питĕ сăртлă.........................................................38
71. Çу иртсе кайрĕ. Август çурри..................39
72. Хĕвел пăхса тăчĕ вăрттăн...........................39
73. Юлашки хут ялтăрса илч………………….40
74. Мĕн шыратпăр, мĕн тупатпăр çак кун уттинче…………………………………….41
75. Вĕрене çӳлерен те çӳле çӳкленчĕ...............42
76. Ĕç тумалли хамăн та темĕн чухлехчĕ.......................................................42
77. Урамра çумăр çăвать. Ку питĕ кăмăллă.........................................................43
78. Хĕвел те пур, уйăх та пур.........................44
79. Чун пĕр савăнать те хурланать.................45
80. Паян эпĕ пĕччен, питĕ пĕччен...................46
81. Питĕ тĕлĕнмелле вĕт-ха вăл......................46

82. Чӳрече айӗнчи роза çеçке çурма тăнă.................................................................47
83. Эпӗ çакна ăнланмастăп:.................................48
84. Сăмах пани 21 çул çитрӗ...........................49
85. Эсӗ çакă тӗнчене çунтарса ярасран хăрăрăм...................................................................49
86. Кашни кун, чăн та, юлашки пек туйăнать.......................................................................50
87. Хӗвел ирпе хӗрелет.......................................51
88. Хальхи туссене çухатрăм..............................52
89. Майӗпен, питӗ майӗпен чăмăртанать чун.............................................................................52
90. Çӗнӗ пурнăçа эпӗ сарă хурăнран пуçларăм......................................................................53
91. Тӗнче пӗтрӗ тесе шутласа пынă чух...............................................................................54
92. Ăт, кӗтсе илтӗмӗр..........................................55
93. Хӗл ларчӗ... Паян тата сивӗрех..................55
94. Эс пăхса тăратăн,...............................56
95. Таса сывлăш кӗчӗ пуль, ача.......................57
96. Тахçанах сиксе тухманчч......................57
97. Аякран куç хӳрипе тӗл пултăм..................58
98. Эс çуралнă вырăнта çӳрерӗм......................59
99. Калать мандолина. Калавçă................59
100. Монна Нина, монна Нина, монна Нина..................................................................................60
101. Пӗлӗтлет ӗнертен............................................60
102. Телейрен пӗр ванчăк юлчӗ........................61
103. Эсӗ мана пӗринче пӗр панулми панăччӗ................................................................................61
104. Пиншер çулсем урлă,......................62
105. Вӗри сывлăша çăвара уçса кăларса ятăм.......................................................................63
106. Эсӗ пултăн маншăн çутă уйăм..................63

107. Тен, ахаль мар çанталăк пĕлĕтлет?....................................................................64
108. Ху шутласа хунă сăмаха питĕ шăппăн каларăн……………………………………………64
109. Мĕншĕн сивĕ вара, мĕншĕн сивĕ?...........64
110. Курса юл мана, курса юл савни!............65
111. Акă тĕнче çуталчĕ,…………………………..66
112. Эсĕ мана ăнланатăн....................................66
113. Çĕр çинче эс анчах пуль, чăнах та.......................................................................67
114. Мана никам та юратмасть, терĕ пĕр хĕрарăм.................................................................68
115. Юр пĕрчи пуль пачĕ паллă.......................68
116. Тĕнче темĕнле виçе пуль,…………………69
117. Тĕнче темĕнле идилли.................................69
118. Эпир çухататпăр...........................................70
119. Аслати пек кĕрлет, çиçĕм евĕр çиçет.........................................................................70
120. Хăш чух пăхкаласа çӳретĕп………………70
121. Эх, мăнтарăн хĕрупраç,……………………71
122. Хĕвел ура пуснă çĕрте…………..................72
123. Эс пур чухне те тăр пĕччен……………..72
124. Эс кам-ха тесе пăхатăп..............................73
125. Пĕр сас. Тен, тĕнче сассиех ку,………...74
126. Паян çу уйăхĕн вĕçĕ...................................74
127. Килчĕ те кайрĕ çур уйăхĕн кунĕ............74
128. Чăлтăрт-чăлтăрт! чăлтăртатр……………...74
129. Майĕпен, ман пекех майĕпен,……………75
130. Ахалех пуль арçынсем, чăнах та,……….75
131. Ах, пуканеçĕм, пукане,…………..................76
132. Никам та кĕтсе илмерĕ................................76
133. Эп урăх пурнăçа пĕлместĕп.......................77
134. Чиперех пуль, чипер, тер…………………77
135. Ирпе паян пĕлĕт çилхеллĕ.........................78

136. Çитет пуль чупса хĕр хыççăн....................79
137. Эп тусан çĕклерĕм утнă чух......................79
138. Çын нихçан та чечек пек………………….80
139. Тĕлĕнмелле пĕр пулăм.................................80
140. Çак самантран пуçлатăп пурăнма……….81
141. Çĕрпе пĕлĕт хушшинче,……………………82
142. Хăш-пĕр тĕлте сар çулçă курăнать...........83
143. Кĕре ўтлĕ кĕрхи çанталăк..........................84
144. Кам калама пĕлет, ман чун шăнкравлă,………………………………………..85
145. Мĕнле пурнăç килсе тухрĕ ку?.................85
146. Çак вăхăтра, пĕлетĕн,………………………86
147. Тек пĕр кун та ахаль ан ирттĕр.............87
148. Эп пĕлместĕп ĕнтĕ, тем пулать паян...............................................................87
149. Хĕвел çутипе мар, çук,…………………….88
150. Кун пек пурăнма май çук..........................89
151. Эп сана ас илме шутламан та..................89
152. Кĕркунне, кĕркунне.......................................90
153. Кун пекки кĕркунне курманччĕ.................91
154. Кунĕсем те ĕнтĕ...........................................91
155. Ирпе тĕлĕнсе пăхатăп.................................92
156. Каçпа кино çеç куртăм...............................92
157. Иртрĕ пулĕ пурнăç, иртрĕ çуркунне.......................................................93
158. Тĕнче усал мар..............................................93
159. Кун пекки пулманччĕ-ха............................94
160. Ирпе шурă юр çунă....................................94
161. Шур юр çуса тасатнă кун………………..95
162. Ни юр, ни шыв, ни пылчăк....................96
163. Эрех ĕçсе çитет те пулĕ............................96
164. Парăнмасăр, пуç таймасăр………………..97
165. «Хуркайăксем карталанса кайрĕç кăнтăра...»……………………………………..98

166. Шутлама пăрахрăм. Шутламастăп та...................................................................99
167. Мĕнле пулĕ вăхăт чунĕ,…………………...99
168. Икĕ хĕр пĕрчи пур……………………….100
169. Тен, юлашки ку сăвă?.............................101
170. Анăçран та çапать кăвак çутă................102
171. Çĕрĕпе çил-тăвăл……………………………103
172. Ал лаппи пек çемçе юр çăвать...............104
173. Кăмăл пулсан килет-ха шухăш................105
174. Кам та пулин вуланă-ши сана,………...105
175. Эп сана тупсаччĕ, тусăм..........................106
176. Йăлтăрр! кăна кулса яч………………….107
177. Юр пĕрчи те эсĕ манăн,………………...107
178. Куçран пăхаççĕ икĕ çулçă:.......................107
179. Пĕчĕк чухнех аттепеле……………………108
180. Çырма çап-çутă куçлă,……………………109
181. Ман çинче симĕс кĕпе..............................109
182. Ăçта тăратăп эп, пĕлместĕп:......................110
183. Утма çулăм çăмăл.......................................111
184. Шап-шурă юр çӳлтен ӳкетчĕ,…………...111
185. Вырăсла сăвăсем……………………………112
186. Вырăсларан куçарнă сăвăсем……………117

**Желтов Михаил Павлович**

**Лубяные стихи**

Стихи на чувашском языке

Печать принтерная
Бумага принтерная
Тираж 10 экз.
Самиздат «Семья»